ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 4 ЭРНЕКУН № 236 (9145) Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
И. Скворцов.—Выльăхсене ăшă витесенче хĕл каçарар (1 стр.).
Совет Правительстви Пакистан Правительствине панă нота (2 стр.).
Суту-илӳ килĕшĕвĕ туни çинчен Совет Союзĕпе Инди пĕлтерни (2 стр.).
В. Перов.—Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстермелли резервсем (2 стр.).
Л. Никитина, К. Смирнов, П. Павлов, Н. Волков. — Суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелле (2 стр.).
Г. Волков.—Математика урокĕсенче (3 стр.)
А. Русин, И. Пронин.—Социализмла ялхуçалăхĕ валли (3 стр.).
Улатăрти паравуссем юсакан заводра (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ (4 стр.).
«Совет Союзĕн Германири 33 предприятине тулеçĕрех Демократиллĕ Германи Республикин харпăрлăхне парас йĕрке çинчен» тунă протокол çине алă пуснă (4 стр.).
Францири хаçатсем Хо Ши Мин пĕлтерни çинчен мĕн çырaççĕ (4 стр.).

Ялти суту-илĕве хăвăртрах вăйлатассишĕн

Совет çынни пурнăçне лайăхлатса пырасси, совет халăхне пур енĕпе те тĕрĕссе аталантарасси пирĕн Коммунистсен партийĕн тĕп закон пулса тăрать. Çынна мĕн кирлине, унăн ӳссе пыракан материаллă тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн—çакăншăн ĕнтĕ уйрăмах тăрăшаççĕ пирĕн партипе правительство.

Совет çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн пирĕн партипе правительство ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени тата ССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерессисем çинчен, советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен йышăннă решенисем уççăн кăтартса параççĕ.

«Халăх вăхăтри задача çакăн пек, — тесе каланă СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире,—советла суту-илĕве хăвăртрах малалла аталантармалла, çапла вара çывăхри икĕ-виçĕ çул хушшинче халăха кирлĕ таварсене кашни халăра тата ялă вырăнти кашни районта пĕр чăрмавсăр çутса тăмалла туса çитермелле, тавар илекенсене лайăххăн тăрăшмалла, вĕсен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтермелле, техника лайăх пулнăçпа ӳчахнаҫан сутуилӳ предприятийĕсене нумай усмалла тата кулен кирлĕ япаласене ӳссе пыракан хисепне—промышленноçпа ялхуçалăхĕ тата кăларакан япаласене—тавар илекенсене патне хăвăрт çитересси организацилемелле».

Кашни совет çынни пирĕн çĕршывра халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси тата советла суту-илӳ хăвăрт ӳссе пынине лайăх курать. 1953 çулта çĕршывра пĕтĕм сутăвĕ 1925 çулхипе танлаштарсан, 7,9 хут ӳсет. Кăçал ялта, хулăна ... велосипед, ... 6 хут, радиоприемник ... автомобиль, мотоцикл, сехет, ... тата ытти паха таварсем ... ӳсет.

[illegible]

Çавăн евĕрлĕ çитменлĕхсем ытти районсенче те пур. Суту-илӳ работникĕсем хăйсен ĕçне вăраххăн çĕнетсе лайăхлатни çинчен суту-илӳ работникĕсен республикăри канашлăвĕнче сахал мар каласа парăç.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа йышăнчĕ. Ăна ăнăçлă пурнăçласси суту-илĕве анлă сарнинчен сахал мар килет. Ял ĕçченĕсен кулен кирлĕ таварсем ыйтнине, колхозсен производстви усă курмалли таварсем ыйтнине туллинрех тивĕçтерме тесе, партипе правительство ялта суту-илĕве лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратрĕç. Потребительсен кооперацийĕн халăха, çавăн пекех колхозсене кирлĕ таварсене сутассине анлă сарма ялалла, магазинсемпе лавккасене таварсем çитменни пулмалла мар. Строительство материалĕсемпе тата производствăра кирлĕ япаласемпе суту-илӳ тăвассине вăйлатмалла. Лавккасем çук кăсенчи халăх валли таварсем илсе пырса сутасси йĕркелемелле.

Суту-илӳ работникĕсем ĕçĕннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсене активлă хистемелле, тĕрлĕ йышши таварсем нумайрах туса кăларассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, хакне йӳнетессишĕн кĕрешмелле.

Ялти суту-илӳ задачине çавăн пекех колхозсене колхозниксен ытлашши ялхуçалăх продукчĕсене тавар çаврăнăшне хутшăнтарасси те кĕрет. Колхоз пасарĕсене сутма колхозсенчен çĕрулми, пахча çимĕç тата ыттисене те комиссие илмелле, çав продуктсене культурăллă сутасси йĕркелемелле.

Халăха таварсемпе тивĕçтерес ĕçе ялсенчи суту-илӳ организацийĕсене тата тĕрлĕ ... ытла ... хушса ... хăват ... пайщиксен активлăхне вăйлатмалла, массăллă магазинсемпе столовăйсен ĕçне тăнăçлă тĕрĕслесе пымалла.

Партипе правительство хăртнă пысăк задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре çапла ... ӳлăхатма, ĕçсене коммунизма воспитани парас, социализмла ăмăртăва çирĕп вăйлатма хушаççĕ.

Кашни районта кирек мĕнле тавар та илмелле тăвас тесен, кĕрĕк килекен таварсене урама тата сутма магазинсемпе складсем ытларах туса пулать. Халĕхи вăхăтра суту-илӳ предприятийĕсем хисепĕ тавар çаврăнăшĕ ӳссе пынинчен юлса пырать. Чăвашпотребсоюз правленийĕн строительство валли уйăрса панă укçа-тенкĕне туллин усă курмасть. План тăрăх палăртнă пекарнăсене, магазинсене, складсене пурне те çĕнĕ çулччен туса çитермелле.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени суту-илӳ организацийĕсен ответлăхне ӳстерет. Чăваш АССР Суту-илӳ министерствипе Чăвашпотребсоюз правленийĕн ялти суту-илӳри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле, работниксен ответлăхне ӳстермелле, малта пыракансен ĕçĕн опычĕне меслетне анлă сармалла.

Халĕ районсенчи суту-илӳ япаласене отчетла суйлав пухăвĕсем пыраççĕ. Çав пухусене идейăла политика тĕлĕшĕнчен лайăх ирттерни, унта критикăна самокритикăна анлă сарни, пайщиксен ыйтăвĕсене хушăвĕсене пурне те шута илни суту-илĕве анлă çара пулăшĕ.

Государство, кооперации суту-илĕвне, колхоза суту-илĕве хăвăрт вăйлатса ярасси партин, советсен тата профсоюзсен мĕнпур органĕсен пысăк задачисенчен пĕри пулать. Совет, парти тата профсоюз организацийĕсен магазинсемпе столовăйсен ĕçне куллен-кун тĕрĕслесе тăрассине пурнăçламалла, суту-илӳ йĕркисене пăснипе, хуçаларăх, кооперации пурлăхне упраман тĕслĕхсене хирĕç тăкăнăн кĕрешмелле, суту-илӳ предприятийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăнмалла.

Партипе правительство ялти суту-илĕве пысăка хурса калаççĕ. Пирĕн социализмла обществăра хулапа ял хушшинчи тавар çаврăнăшĕ ӳсни рабочи класспа хресченсем хушшинчи союза çирĕплетме пулăшать.

Малта пыракансен опычĕпе паллаштаракан киножурнал

[illegible] колхозсенче халăхи вăхăтра «Новости сельского хозяйства» киножурнал кăтартаççĕ. ... колхозăн ял ĕçченĕсене малта пыракан колхозсен опычĕпе паллаштарма ... опытпа паллаш...

[illegible] Мускав облаçĕнчи Раменск ... «Ĕнер к коммунизм» ... районĕнчи «Луч», ... Хрушев ячĕпе ... А. М. Горький ячĕпе т...

ракан совхозăн тата ытти колхозсене çитĕнтерсе илекен опычĕ тăрăх пахча çимĕçсене тăватнал меслетпе лартса туни халичченхи меслетпе лартса тунинчен темиçе ут тухăçлăрах пулнине ĕненмелле кăтартать.

Çакăнпа пĕрлех киножурнал пахча çимĕçсене çĕнĕ меслетпе лартса тумалли агротехника правилисемпе паллаштарать.

Киножурнала колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, хуçалăх специалисчĕсем ... пысăк кăсăкланса пăхаççĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Механизаторсем çулталăк тăршшĕпех ĕçлеççĕ

СТАВРОПОЛЬ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Надеждински МТС мастерскойĕнче халĕ никам та çук. Станци коллективĕ ноябрь уйăхĕ пуçланнă тĕле тракторсене, комбайнсене, плугсене, сеялкăсене тата ытти машинăсене те юсаса пĕтернĕ. Тракторсемпе машинăсене юсаса пĕтернĕ хыççăн, трактористсем, комбайнерсем, тимĕрçĕсем, токарьсем—пурĕ 86 çын строительсен пулса ĕçлеме вĕренме тытăннă. Вĕсем тăватă ушкăна уйрăлнă та каменщиксем, кровельщиксем, платниксем тата слесарь-монтажниксем пулса ĕçлеме вĕренеççĕ.

Вĕсем, теорие вĕреннĕ вăхăтрах, МТС ĕçлекен колхозсенче практикăлла ĕçсем туса пыраççĕ. Слесарь-монтажниксен ушкăнĕ «Победа» ялхуçалăх артелĕн фермичче автопоилка тата çилпе ĕçлекен двигатель лартса панă. Платниксемпе кровельщиксем сысна витине пăру тата лаша витисем туса пĕтереççĕ.

МТС килкартинче те пысăк строительство площадки туса хунă. Механизаторсем колхозниксемпе пĕрле чул кăларса хатĕрлеççĕ. Строительство материалĕсем вырăнтах çителĕклĕ хатĕрлесе хураççĕ. Каменщиксен бригади машинăсем лартмалли сарай стенисене купаланă. Машина-трактор станцийĕн валли типовăй мастерской тума никĕс хывма пуçланă.

Надеждински МТС-ĕнче штат тăрăх пулмалли работниксем пурте пур. Бунти кашни рабочи темиçе тĕрлĕ ĕç тăвать. Çакна май çулталаăк тăршшĕпех вăхăтсене çеç ĕçлес йĕрке пĕтнĕ. Халĕ ĕнтĕ МТС работникĕсен ĕçĕ ... çулталаăк тăршшĕпех ĕçлеççĕ. Вĕсем МТС ĕçлесе паракан колхозсенче пур тĕрлĕ ĕçе те хутшăнаççĕ. Кунта строительство ĕçĕ уйрăмах анлăн сарăлнă. Халĕ 134 механизатор строительсен пулса ĕçлеççĕ.

ОШ ХУЛИНЧЕ ТУСА КĂЛАРАКАН ПУРÇĂН

ОШ (Киргиз ССР-ĕ). (ТАСС). Ош хулинчи пурçăн комбиначĕ ĕнер суту-илӳ организацийĕсене илемлĕ тĕслĕ крепдешин, шотландка нумай ярса панă. Кăçал предприяти коллективĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах продукци туса кăларнă.

Комбинатра ĕçлекенсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешеççĕ. Юлашки вăхăтра пĕрремĕш сортлă пурçăн туса кăларасси виçĕ хут ӳснĕ.

Конституци кунĕ ячĕпе ĕç вахтине тăрса, Ош комбиначĕн работникĕсем çулталаăк планран ирттерсе 70 пин метр ытла пир-авăр тĕртсе кăларма пулнă.

Мускав облаçĕ. Ореховри пир-авăр комбиначĕн коллективĕ Орехово машина-трактор станцийĕ шефа илнĕ. Шеф МТС территорийĕнче икшер хваттерлĕ икĕ çурт лартса панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Орехово МТС-ĕн пурăнмалли çĕнĕ çурчĕсем.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çулталăкри планран ирттерсе продукци туса кăлараççĕ

КИЕВ. Киеври «Транссигнал» ятлă электротехника завочĕ Çурçĕр чугун çулĕ валли çулталаăкри планран ирттерсе туса кăларнă аппаратура ăсатнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, продукци туса кăларасси 28 процент ӳснĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетнипе пула плантан ирттерсе пĕр миллион тенке яхăн накопления тунă.

Предприяти коллективĕ чугун çулсем валли çĕнĕ йышши механизмсем туса кăларма вĕренсе çитет.

ВИТЕБСК. Витебскри сĕтел-пукан фабрики çитес çулхи план шучĕпе туса кăларнă 7 вагон сĕтел-пукана Мускаври, Минскри тата Могилеври суту-илӳ организацийĕсене ярса панă.

Фабрикăра ĕçлекенсем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхне 23 процент ӳстернĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен ытларах йӳнетсе, 600 пин тенке яхăн перекетленĕ. Пĕрремĕш сортлă сĕтел-пукан туса кăларас тĕлĕшпе задание 7 процента яхăн ирттерсе тултарнă.

Декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС).

МТС-семпе колхозсенче шут ĕçне тăвакан работниксем

ГОРЬКИЙ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Ялхуçалăх министерствин Пĕтĕм Союзри заочнăй курсĕсен Горький хулинчи филиалĕ Чăваш АССР-ĕпе Мари АССР-ĕнчи, Горький облаçĕнчи колхозсем валли шут ĕçне тăвакан работниксем хатĕрлет. Филиал ĕçлеме тытăннăранпа колхоз учечĕн ăстисене темиçе пин çын вĕрентсе кăларнă. Кăçал кăна 568 çын колхозсен бухгалтерĕсемпе счетоводсен, МТС-сенчи колхоз учечĕн инструктор-бухгалтерĕсен тата МТС бухгалтерĕсен квалификацине ӳснĕ. Халĕ курсĕсенче вĕренме 800 çын ытла çырăннă.

Паян кунта Горький облаçĕнчи колхоз учечĕн инструктор-бухгалтерĕсен — МТС-сене ĕçлеме кусă çынсен—10 кунлăх семинарĕ вĕçленнĕ. Семинарта пулнă 90 çын партипе правительство ялхуçалăх çинчен йышăннă решенисем çинчен, колхозсенчи учетпа отчет çинчен тата ытти темăсем тăрăх та лекцисем илтнĕ.

Пензăри сехет заводĕнче

ПЕНЗА, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Пензăри сехет завочĕн коллективĕ облаçри промышленность предприятийĕсен хушшинче çулталаăк плана срокчен тултарассишĕн ăмăрту пуçарнă. 11 уйăхри планта срокчен пурнăçласа, предприяти арçынсен алла, çыхса çӳремелли сехетсене тата хĕрарăмсен алла çыхса çӳремелли «Звезда» йышши сехетсене çулталаăк данирен ирттерсе 14 пин ытла туса кăларнă. Ноябрь уйăхĕнче заводра сменăри нормăсене тултарса пыман пĕр çын те пулман.

Нумай пулмасть çĕнĕ конвейер вырнаçтарса лартнă. Ун çинче хĕрарăмсем «Заря» йышши сехетсене пуххa тытăннă.

Колхозниксем выльăх-чĕрлĕх туянаççĕ

ЧЕРНИГОВ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хыççăн Лосиновка районĕнчи колхозниксем 1.500 пуç выльăх-чĕрлĕх туяннă. Ялхуçалăх артелĕсем ĕнесĕр колхозниксем валли пăрусем уйăраççĕ, кил çен укçа параççĕ.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче облаçри темиçе пин колхозник ĕне туяннă. Ĕне туянма колхозниксене пулăшу кассисем çур миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Ултă ... кураксен акнипе ... валли апачĕ çирĕп илнипе туса, колхозсем ĕскунĕсене ... пин пиншер тонна паха утă валесçĕ...

ХУЛАСЕМ ÇЫВĂХĔНЧЕ ÇĔРУЛМИПЕ ПАХЧА ÇИМĔÇ ТУСА ИЛЕС ĔÇ ВĂЙЛАНАТЬ

ПЕТРОЗАВОДСК. (ТАСС). Карело-Финн ССР Министрĕсен Совечĕ çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса тăвакан лаптăка малалла пысăклатасси тата çĕрулмипе пахча çимĕçсен тухăçлăхне ӳстересси çинчен постановлени йышăннă. 1954 çулта хуласем çывăхĕнче вырнаçнă 126 колхозра акакан пĕтĕм çĕр лаптăкĕнĕн 15—20 проценчĕ чухлĕ çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса хăвараççĕ.

ПЕДАГОГИКА УЧИЛИЩИ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ

ЮЖНО-САХАЛИНСК, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Александровск-Сахалинский хулинчи общественность ĕнер педагогика училищи 20 çул тултарнине паллă турĕ. Педагогика училищине уçăлнăранпа унта 600 ытла ялхи учитель вĕренсе тухнă. Вĕсем пурте Сахалинра ĕçлеççĕ.

Выльăхсене ăшă витесенче хĕл каçарар

Пирĕн республикăри чылай колхозсен выльăх-чĕрлĕх витисем тумалли государство планне ăнăçлăн пурнăçларĕç, çапла вара выльăхсене хĕл каçарма лайăх условисем турĕç.

Çак задачăна уйрăмах Муркаш Етĕрне районĕсенчи колхозсем лайăх пурнăçларĕç, вĕсем выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк витисем тумалли çулталăкри плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарчĕç. Комсомольски тата Чурачăк районĕсенчи колхозсем те общественлă выльăх-чĕрлĕх витисем тумалли плана чылай ирттерсе тултарчĕç.

Строительство ĕçĕ уйрăмах Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тата Хрущев ячĕпе тăракан колхозсенче, Октябрьски районĕнчи «Звезда», Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе, Ленин ячĕпе, Свердлов ячĕпе тăракан, Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат», Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе, Канаш районĕнчи «Канаш», Етĕрне районĕнчи Буленный ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенче ăнăçлă пырать. Çав колхозсенче юлашки виç-тăватă çул хушшинче выльăхсем валли кайăк-кĕшĕк валли витесем çĕнĕрен нумай тунă.

Асăннă ялхуçалăх артелĕсенче вырăнти строительство материалĕсенче анлăн усă курни строительство ĕçне ăнăçлă туса пыма май панă. Сăмахран, Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхозра юлашки çулсенче стенасене кирпĕчрен купаласа виçĕ выльăх вите тунă, кирпĕчне хăйсен колхозĕнче туса хатĕрленĕ. Шлак-бетонран автогараж тата стенасене кирпĕчрен купаласа лаша витине туса пĕтереççĕ.

Çавăн пек колхозсем шучĕ республикăра ӳссех пырать. Кун пек колхозсенчи коммунистсем выльăхсене хĕл каçарма лайăх условисем тăвассишĕн куллен-кун тăрăшаççĕ, ... лайăх ... , вырăнти материалсемпе анлăн усă курса типовăй витесем тăваççĕ ...

... ферма ... сĕтел ... çĕнетĕн ...

пула выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитĕнӳсем тăваççĕ.

Çав вăхăтрах пирĕн республикăра витесем тăвасси çинчен шухăшламан колхозсем те пур-ха. Ун пек колхозсенче строительство планне çулсерен тултармаççĕ. Çавăн пирки пирĕн республика общественлă выльăх-чĕрлĕх валли витесем тăвас тĕлĕшпе питĕ юлса пырать. Строительство ĕçĕ уйрăмах Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче питĕ начар пырать, вĕсенче плана мĕн пурĕ те 3—33 процент кăна тултарнă.

Çав районсенчи чылай колхозсене нумай çулсем хушши выльăх витисем тумасăр, çапла вара та хĕл вăхăтĕнче выльăхсене чăтма çук йывăр условире пулаççĕ.

Çакă чи кирлĕ ĕç мĕншĕн пурнăçланмасăр юлать-ха, çавтабĕ ăçта? Çавтабĕ пĕрре çес: çав районсенчи ялпа колхоз строительстви пайĕсен работникĕсем колхоз председателĕсен умне тивĕçлĕ требованисем лартмаççĕ тата ĕçе йĕркелесе яма пулăшу памаççĕ.

Общественлă витесемпе сооруженисен строительстви пурнăçланмасăр юлни уйрăм колхоз председателĕсен дисциплинăна пăсниничен те килет. Пăрачкав районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан тата «Большевик», Çĕрпӳ районĕнчи Калинин ячĕпе, Ворошилов ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан, «Правда», «Первое мая» колхозсенче выльăхсем валли витесем питĕ юлса пыраççĕ. Колхозсенче чылай çулсем хушши ĕнтĕ витесем тумасăр, ... вăрмана усă курмалли билетсене касса кăлармасăр юлнăран ...

лет. Сăмахран, Пăрачкав райисполкомĕ ... кăна ытла 1953 çулта колхоз председателĕсемпе тата строительство бригадирĕсемпе пĕр канашлу та, пĕр семинар та ирттермен. Халăхпа мар ĕнтĕ районти колхозсем выльăх-чĕрлĕх витисем тумалли плана пĕтĕмпе те 3 процент кăна тултарнă.

Республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас ĕç пурнăçланмасăр юлнишĕн хăшпĕр вăрман хуçалăхĕсем те чылай айăплă, мĕншĕн тесен вĕсем колхозсене час-часах юрăхсăр йывăçсем уйăрса параççĕ.

Республикăри уйрăм колхозсенче выльăх витисене юсаса ăшăтас ĕç те çав тери япăх тăрать. Сăмахран, Тăвай районĕнчи «Звезда», Хрущев ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче хĕл вăхăтĕнче выльăхсене урамран витесем ку таранччен хатĕр мар.

Райисполкомсем, ялхуçалăх управленийĕсем тата ялпа колхоз строительствин пайĕсен выльăхсене хĕл каçарма витесем хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме, çак кунсенче витесене пурне те юсаса тата ăшăтса çитерме тивĕçлĕ. Вăрман хуçалăхĕсен колхозсене 1954 çул шучĕпе вăрман уйăрса пама пулăшмалла, çапла вара ку таранччен туса çитермен витесене пурне те туса çитермелле пулать.

Строительство пайĕсен работникĕсен выльăхсене хĕл каçарма лайăх майсем туса парассипе çине тăмалла.

Çак ĕçре колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. МТС директорĕсем колхозсенче ĕçлекен МТС специалисчĕсен умне выльăхсене хĕл каçарма условисем тăвас ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерессишĕн ответлă пулма çирĕп требовани лартмалла.

Н. СКВОРЦОВ,
Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин строительство управленийĕн ...

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сенче ТРАКТОРСЕМПЕ ЫТТИ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА
(Ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне, процентпа).

МТС-сем	Юсанă: Тракторсем	Плугсем	Сеялкăсем
1. Красноармейски	87	71	65
2. Йĕпреç	68	75	100
3. Вăрнар	67	22	25
4. Улатăр	61	34	104
5. Чкаловски	58	76	169
6. Пăрачкав	53	45	48
7. Сĕнтĕр	52	61	150
8. Шăхасан	52	62	56
9. Комсомольски	50	60	89
10. Советски	50	55	73
11. Элĕк	48	31	124
12. Çĕрпӳ	46	52	81
13. Вăрмар	46	62	67
14. Шупашкар	44	60	67
15. Сурмайдан	42	8	69
16. Сĕнтĕрвăрри	41	35	43
17. Канаш	41	43	44
18. Шăмăршă	40	42	41
19. Октябрьски	38	40	84
20. Чурачăк	38	42	119
21. Елчĕк	38	47	82
22. Кувакино	37	30	27
23. Хĕрлĕ Чутай	31	33	100
24. Тăвай	29	54	81
25. Ишлей	28	64	59
26. Сиява	27	40	43
27. Етĕрне	23	86	45
28. Первомайски	22	50	75
29. Çĕмĕрле	18	12	80
30. Калинино	17	32	71
31. Муркаш	15	4	60
32. Куславкка	8	4	40

Колхозри строительство

МУРКАШ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз кăçал выльăх-чĕрлĕх валли апат, тĕштырă çителĕклĕ уйăрчĕ. 40 сысна ... 1.000 пуç чăх-чĕп вырнаçмалли витесем тунă. Çак кунсенче самрăк ... 50—60 тонна çĕрулми вырнаçмалли ...

Суту-илӳ ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтермелле

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ «Совет суту-илӗве малалла аталантарса пымалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановление Чурачӑк районӗнчи ӗҫсыннисем пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ. Ҫав постановленипе вӗсем Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑхӑн пурнӑҫӗпе культурине лайӑхлатассишӗн ырми-канми тӑрӑшнине тепӗр хут уҫҫӑн кураҫҫӗ.

Потребительсен обществинче халӗ отчетпа суйлав кампанийӗ пуҫланчӗ. Чурачӑк районӗнчи потребительсен обществин правленийӗ те хӑйӗн иртнӗ ҫулталяӑкри ӗҫӗсем ҫинчен пайщиксем умӗнче отчетсем туса пама тытӑнчӗ. Ялти ӗҫсыннисем унӑн отчетне активлӑн сӳтсе яваҫҫӗ, суту-илӗве организацилес ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртса, вӗсене пӗтермелли майсене кӑтартса параҫҫӗ.

Районти потребительсен обществин кӑҫалхи 10 уйӑх хушшинчи ӗҫ итогӗсем ҫине пӑхсан, вӑл ялти суту-илӗве аталантарас енӗпе япӑх мар ӗҫленӗ пек курӑнать. Таварсене ваккӑн сутмалли плана 102,4 процент тултарнӑ, ӗҫсыннисем кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен 562 пин тенкӗлӗх нумайрах тавар туяннӑ. Тавар ҫаврӑнӑшне ӳстернӗ май, издержкӑна палӑртнинчен 103 пин тенкӗ ытларах тупӑш илнӗ.

Анчах ҫак пӗтӗмӗшле цифрӑсем ӗҫре ҫитменлӗхсем ҫуккине пӗлтермеҫҫӗ. Перекетлӗх режимне ҫирӗппӗн пӑхӑнман пирки уесӑр тӑкаксем 43 пин тенке ҫитнӗ, растратӑсен суммй те пысӑк. Суту-илӳ культурине лайӑхлатасси ҫине правлени ҫаврӑнса пӑхмасть, ӗҫсыннисен куллен ӳсе пыракан ыйтӑвӗсене тулли тивӗҫтерме, тавар ҫаврӑнӑшне аталантармалли майсемпе усӑ курма кирлӗ пек тӑрӑшмасть.

ТАВАР ТУЯНМА—ЧУГУН ҪУЛ СТАНЦИНЕ

Район центрне илсенчӗн ӗҫне е тавар туянма пынӑ колхозниксем пӗр-пӗрне калаҫнӑ чухне тӑтӑшах ҫакӑн пек ыйтусем пачӗнеҫҫӗ:

— Сирӗн ялти ларекра тавар пур-и?
— Тахҫантанпах ҫук ӗнтӗ.
— Краҫҫын?
— Канаша е Сӗрпӳне кайса туянатпӑр.

Тӑварӗ ытлашшипех ҫитет. Ӑна вагонпа Трак разъездне кӳрсе килнӗ те, ҫӗр ҫинех пушатса купаланӑ. Халӗ вӑл юрпа йӗпенсе, пӑравус тӗтӗм-кӗмрӑкӗпе вараланса выртать.

Мӗншӗн ҫав тавара илсене часрах ӑсатма васкамаҫҫӗ? Ун пек йӳнӗ таварсемпе суту-илӳ туни коопераци работникӗсемшӗн питех тупӑшлӑ мар-мӗн. Пӗр велосипед е ҫӗвӗ ҫӗлекен машина хакӗ чухлӗ тӑвар сутас тесен, ӑна хавӗ-хавӗпе турттарма тивет-ҫке. Ахальтен мар ӗнтӗ кӑҫалхи вунӑ уйӑх хушшинче районти ӗҫсыннисене тӑвар сутмалли плана 61 процент ҫеҫ тултарнӑ. Краҫҫын, чӳрече кӗленчи, тимӗр савӑт-сапа, сӗтел-пукан, ҫӗр мамӑкӗнчен тӗртсе тунӑ пир-авӑр сутмалли плансене те тултараймаи.

Куллен кирлӗ таварсене туянма ялти ӗҫсыннисен ирӗксӗрех инҫетри ҫула кайма тивет. Пысӑк Чӑрӑш тата Аслӑ Тукаль ял Совечӗсенчи колхозниксем тӑвар, краҫҫын туянма Сӗрпӳ станцине ҫӳреҫҫӗ, Канаш енчисем—унталла ҫул тытаҫҫӗ. Ҫакӑн ҫинчен тахҫанах калаҫҫӗ, анчах районти потребительсен обществин правленийӗ мерӑсем йышӑнмасть.

Унӑн складӗнче 100 ещӗк ытла шӑрпӑк выртать. Ноябрӗн 23-мӗшӗнче, тунтикун, Чурачӑк пасарӗнче пӗр лавккара та шӑрпӑк пулмарӗ. Унччен темиҫе кун маларах район центрӗнчи магазинсенче те шӑрпӑк тупса илме хӗн пулнӑ.

САЙРА ХУТРА УҪАЛАКАН МАГАЗИНСЕМ

МТС суртӗнче уҫнӑ ларек умӗнче тракторнстсемпе механиксем кӗпӗрленсе тӑраҫҫӗ.

— Продавщица ӑҫта?—ыйтаҫҫӗ пӗрисем.
— Ирхине пурччӗ, халӗ таҫта кайнӑ.
— Апла пулсан, кӗтес те мар,—терӗҫ пурте.

Каҫ кӳлӗм ларек чӳречи уҫӑлчӗ, каллех трактористсем пухӑнчӗҫ.

— Сахӑр виҫсе пар-ха, — ыйтать пӗри,—чей ӗҫме нимӗн те ҫук.
— Сахӑр ҫук, канфет илӗр,—ответлет продавщица Никитина юлташ.
— Килограмӗ миҫе тенкӗ тӑрать?
— 45 тенкӗ.
— Махорка парӑр-ха.
— Махорка ҫук, — илтӗнет ларек ӑшӗнчен сасӑ.

Трактористсем каялла ҫаврӑнса кайрӗҫ, ларек чӳречи тепӗр кунччен хупӑнчӗ.

Иккӗмӗш Вӑрманкасри пайщиксен умне тата пысӑкрах йывӑрлӑх тухса тӑнӑ. Вӗсен ялӗнчи магазин хупӑннӑранпа ҫур ҫул ҫитет ӗнтӗ, анчах ӑна ниепле те уҫаймаҫҫӗ,—правлени продавец тупма пултараймасть-мӗн. Колхозниксем халӗ вак-тӗвек тавар туянма та район центрне ҫӳреҫҫӗ.

Район центрӗнчи магазинсемпе ларексем те йӗркеллӗ ӗҫленине курма ҫук. Районти потребительсен обществин магазинӗ, продавецсем ушӑннӑ пирки, ҫулла икӗ уйӑх ытла хупӑнса тӑнӑ. Халӗ ӑна тепӗр хут хупрӗҫ,—каллех продавецсем ушӑнмалла иккен.

Пысӑк Чӑрӑшри магазин—сайра хутра уҫӑлаканнисенчен пӗри. Продавец Миронов юлташ ҫирӗп кун йӗрки тӑрӑх ӗҫлесе кӗтме те ҫук, мӗншӗн тесен вӑл колхозра хӑмла пӑхса ӳстерекен бригадӑна ертсе пырать.

ХАРИТОНОВ КОЛХОЗНИК МӖНШЕН ШИФЕР ТУЯНАЙМАСТЬ?

«Большевик» колхоз членӗ, Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ Н. Харитонов юлташ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановление вуласа пӗлнӗ хыҫҫӑн, Чурачӑкри ҫу заводне пынӑ.

— Эпӗ хамӑн хуҫалӑхран государствӑна обязательнӑй йӗркепе сӗт памалли задание тахҫанах пурнӑҫларӑм, — тенӗ вӑл.—Халӗ государствӑна ҫу сутма шутлатӑп, пӳрт тӑррине витме шифер туянасчӗ.

— Питӗ аван,—ырланӑ ӑна завод директорӗ П. Павлов юлташ.—Пирӗн заводӑн хӑйӗн ҫеҫ кӑҫал государство валли 58 пин килограмм сӗт сутӑн илмелле. Ҫав сӗтшӗн колхозниксемпе колхозсене сутма пире потребкоопераци урлӑ автомашинӑсем, шифер тата ытти промышленность таварӗсем уйӑрса параҫҫӗ.

Октябрь уйӑхӗнче Харитонов юлташ завода 42 килограмм ҫу пырса панӑ. Унӑн ӑна 150 листа шифер пама пулнӑ.

Унтанпа икӗ уйӑх иртрӗ, анчах колхозник хӑйне питӗ кирлӗ шифера ниепле те туянаймасть. «Шифер ҫук», теҫҫӗ ӑна кашни хутӗнчех.

Государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутакан колхозниксемпе колхозсене пама нин листана яхӑн шифер, темиҫе тонна тимӗр листи, бензин, чӳрече кӗленчи, пӑта, электричество провочӗ, ӳсӗпӑлӑв, хуҫалӑхра кирлӗ ытти таварсем нумай кӳрсе килмелле.

Ҫав таварсене вӑхӑтра кӳрсе килме райпо правленийӗ тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман. Ҫу заводӗпе договор тунӑ колхозсенчен Сталин ячӗпе тӑракан тата «Гигант» артельсен ҫеҫ 600-шер килограмм бензин туянса юлнӑ.

Районти потребительсен обществи правленийӗн председателӗ С. Лукин юлташ каланӑ тӑрӑх, колхозниксемпе колхозсене сутма халӗ тӑватӑ тонна тимӗрпе шифер пур. Анчах ҫав таварсене вырӑна часрах ҫитерме, колхозсене выльӑх-чӗрлӗх витисем тӑвас ӗҫре пулӑшма васкамаҫҫӗ.

Иртнӗ уйӑхра магазина ҫӗнӗ ҫӗлемелли машинасем кӳрсе килнӗ.

— Ку машинӑсене государствӑна ҫӑмарта сутакансене паратпӑр,—тенӗ правленире.

Тӑватӑ машинине ҫӑмарталла сутни палӑ, ыттисене кама тата мӗншӗн пани ҫинчен пӗри те уҫӑмлӑн калаймарӗҫ.

Тӑван ҫӗршыв умӗнчи обязательствӑсене тӳррӗн пурнӑҫланӑ тата государствӑран пысӑк пулӑшу илнӗ хыҫҫӑн нумай колхозниксем коопераци урлӑ выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутма кӑмӑл тӑваҫҫӗ. Анчах правлени вӗсен ыйтӑвне тивӗҫтерес тӗлӗшпе хӑйӗн пуҫарулӑхне кӑтартаймасть.

Партипе правительство суту-илӳри мӗнпур работниксене хӑйсен ӗҫӗнчи культурӑна ӳстерме, суту-илӗве организацилес ӗҫри ҫитменлӗхсене хирӗҫ вӑйлӑнрах кӗрешме, тавар ҫаврӑнӑшне малалла ӳстерме, халӑхшӑн ытларах тӑрӑшма кӑтартту пачӗҫ. КПСС Чурачӑк райкомӗпе райисполкомӑн районти потребительсен обществин ӗҫне малалла лайӑхлатасси ҫине тимлӗрех пӑхмалла.

«Коммунизм ялавӗ» хаҫат бригади:
Л. НИКИТИНА, К. СМИРНОВ,
П. ПАВЛОВ, Н. ВОЛКОВ.

Агитаторсемпе ялкорсен районти пухӑвӗ

СОВЕТСКИ. Ҫак кунсенче агитаторсен, «Коммунизм ялавӗпе» районти «Совет ялавӗ» хаҫатсен корреспонденчӗсен тата стена хаҫат редакторӗсен районти пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта 153 ҫын пухӑнчӗ. Пуху партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе агитаторсем, ялти корреспондентсемпе стена хаҫачӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен сӳтсе яврӗ. Ку ыйтупа парти райкомӗн пропагандӑпа агитаци пайӗн заведующийӗ Г. Яковлев тата районти хаҫат редакторӗ С. Налимов юлташсем докладсем туса пачӗҫ.

Пренире 11 ҫын тухса каларӗ. Вӗсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене ӗҫсыннисене ӑнлантарса парас ӗҫри опытпа паллаштарчӗҫ, ҫак ӗҫри ҫитменлӗхсене тата ҫитменлӗхсене пӗтермелли майсене кӑтартса пачӗҫ. Ленин ячӗпе тӑракан колхозри партбюро секретарӗ Г. Исаев юлташ агитколлектив ӗҫӗ ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Агитколлектив 36 ҫынна пӗрлештерсе тӑрать. Вӗсене уйрӑм участоксем ҫумне ҫирӗплетнӗ. Вӗсем колхозниксене ӗҫре хавхалантарса пыраҫҫӗ. Ҫакна май колхоз кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илнӗ, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл парти райкомӗпе унӑн пропагандӑпа агитаци пайӗ агитколлективсене ҫителӗксӗр пулӑшнине палӑртрӗ. Райком агитколлектив руководителӗсен семинарӗсене сахал иртерет, лайӑх ӗҫлекен агитаторсен паха опытне сарса ырас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлет. Райком работникӗсем вырӑна тухса ӗҫе лайӑхлатма ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ.

Тухса калаҫакансенчен чылайӑшӗ кашни уйӑхрах агитаторсен районти канашлӑвне иртерме, вӗсенче уй-хир бригадирӗсен, ферма заведующийӗсен, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре малта пыракансен опычӗпе паллаштарма кирлине палӑртрӗҫ.

Мӑн Чураш ял Совечӗ ҫумӗнче тухса тӑракан стена хаҫачӗн редакторӗ В. Петров юлташ стена хаҫатӗнче тухнӑ материалсен витӗмлӗхӗшӗн кӗрешменнине, колхозсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсем стена хаҫачӗсен редколлегийӗсене ӗҫре пулӑшса пыманнине палӑртрӗ.

— Пирӗн стена хаҫачӗ йӗркеллӗ тата вӑхӑтра тухса тӑрать. Хаҫатӑн активӗ пысӑк. Стена хаҫатӗнче ӗҫри ҫитменлӗхсене критикласе ҫырнӑ статьясем нумай пичетлетпӗр. Анчах колхоз правленипе пуҫламӑш парторганизаци критикӑлла статьясем тӑрӑх тивӗҫлӗ ӗҫсем тумаҫҫӗ. Ҫакӑн ҫинчен районти «Совет ялавӗ» хаҫат ҫине те ҫырнӑ, парти райкомне те ҫырса пӗлтернӗ. Вӗсем те пире ҫак ӗҫре пулӑшмарӗҫ.

Пренире тухса калаҫнӑ юлташсем районта тата республикӑра тухса тӑракан хаҫатсем лайӑх ӗҫлекен агитколлективсемпе агитаторсен, колхозсенчи стена хаҫачӗсен ӗҫӗсене сахал ҫутатнине, стена хаҫачӗсен обзорне туманнине кӑтартса пачӗҫ. Билтӗшри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Усов юлташ республикӑри хаҫатсем ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен опытне ҫителӗксӗр ҫутатнине, ялти корреспондентсене ӗҫлеме куллен вӗрентсе пыма кирлине палӑртрӗ.

Н. ЦВЕТКОВ.
(Хамӑр корр.).

ҪӐМӐЛ АВТОМАШИНА ТУЯНЧӖҪ

ЧУРАЧӐК. Метикассинчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫал государствӑна сӗт сутса грузсем турттармалли тата «ГАЗ-67» маркӑллӑ ҫӑмӑл автомашина туянчӗ. Халӗ колхозӑн виҫӗ автомашина.

П. ВЛАДИМИРОВ.

Совет Правительстви Пакистан Правительствине панӑ нота

Кӑҫалхи ноябрӗн 30-мӗшӗнче ССР Союзӗн Пакистанри Посолӗ А. Г. Стеценко Пакистанӑн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗн ӗҫӗсене туса пыракан Дж. А. Рахим патне пырса кайнӑ. Вӑл ӑна ҫакӑн пек нота панӑ:

«Юлашки вӑхӑтра тӗрлӗ ҫӗршывсенчи хаҫатсенче, вӑл шутра Америкӑри хаҫатсенче, Пакистан Правительствипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительстви хушшинче килӗшӳ тӑвасси ҫинчен калаҫусем пыни ҫинчен пӗлтерӳсем пичетленсе тухрӗҫ. Вӑл килӗшӳ Пакистан территорийӗ ҫинче Америкӑн авиаци ҫар базисене тума палӑртать.

Ҫакна май США-н хӑшпӗр государство деятелӗсем пӗлтерни пирки те асӑнмалла. Вӗсем Пакистан Правительствипе США Правительстви хушшинче ҫӳлте асӑннӑ калаҫусем ҫинчен тӑракан ыйту тӑрӑх сӑмах тапратнӑ. Государство деятелӗсем ҫавӑн пек калаҫусем пынине йышӑнаҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне, Пакистана Вӑтам Хӗвелтухӑҫӗнчи агрессиллӗ ҫар блокне тумалли плансене пурнӑҫланӑ ҫӗре хутшӑнтарасси ҫинчен тӑракан ыйту тӗлӗшпе Пакистан Правительствипе США Правительстви хушшинче калаҫусем пулса иртни ҫинчен пӗлтерӳсем пичетленсе тухнӑ.

Совет Правительстви Пакистан Правительствине ҫакӑн ҫинчен аса илтерме кирлӗ тесе шутлать: Совет Союзӗ ҫӳлте асӑннӑ калаҫусем ҫине лӑпкӑн пӑхма пултараймасть. Мӗншӗн тесен Пакистан территорийӗ ҫинче, урӑхла каласан, ССР Союзӗн чиккисем ҫывӑхӗнчи районта, Америкӑн авиаци ҫар базисене тӑвасси ҫинчен килӗшӳ туни, ҫавӑн пекех Пакистана Вӑтам Хӗвелтухӑҫӗнчи блока тумалли плансене пурнӑҫлас ҫӗре хутшӑнтарни Совет Союзӗн хӑрушсӑрлӑхне тӳрех пырса тивет.

Совет Правительстви ҫӳлте калани ҫинчен Пакистан Правительстви ӑнлантарса панине илесшӗн». (ТАСС).

Суту-илӳ килӗшӗвӗ туни ҫинчен Совет Союзӗпе Инди пӗлтерни

Пӗр-пӗрне ӑнланса туслӑ лару-тӑрура иртнӗ калаҫусем ӑнӑҫлӑн вӗҫленнӗ хыҫҫӑн, Делире 1953 ҫулхи декабрӗн 2-мӗшӗнче СССР-па Инди хушшинче суту-илӳ ҫинчен пилӗк ҫуллӑха тунӑ килӗшӳ ҫине алӑ пуснӑ. Килӗшӳ пӗртанлӑхпа пӗр-пӗриншӗн усӑллӑ никӗс ҫинче икӗ ҫӗршыв хушшинчи суту-илӳ ҫыхӑнӑвӗсене пур майсемпе те аталантарса тата ҫирӗплетсе пыма палӑртать.

Ку килӗшӳ СССР-па Инди хушшинче пӗрремӗш хут тунӑ суту-илӳ килӗшӗвӗ пулса тӑрать. Ҫак килӗшӳпе суту-илӳ тумалли тата суднӑсем ҫӳретмелли режима, ҫавӑн пекех ҫӗршывсем хушшинче пӗр-пӗрне тӳлемелли йӗркене ҫирӗплетнӗ.

Килӗшӳре палӑртнӑ тӑрӑх, Инди Совет Союзне малтанхи ҫул парса тӑмалли таварсен шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ: джутран тунӑ изделисем, чей, кофе, табак, шеллак, хура пӑрӑҫ тата ытти лайӑх япаласем, ҫӑм, сӑранпа тирсем, ӳсентӑранпа эфир ҫӑвӗсем тата ытти чылай таварсем.

Совет Союзӗ Индие парса тӑмалли таварсен списокне ҫаксене кӗртнӗ: тӗштырӑ (тулӑ, урпа), нефть тата нефть продукчӗсем, йывӑҫ материалсемпе хут, тимӗрпе хурҫӑран тунӑ изделисем, химикалисем, пӗветмелли сӑрӑсем, эмелсем, оптика, кинофильмсем, пичет произведенийӗсемпе ытти таварсем, ҫавӑн пекех тӗрлӗ йышши промышленность оборудованийӗ. Вӑл оборудовани шутне ҫӗре пӑраласа шӑтармалли, шахтӑра тата ҫул-йӗр тунӑ ҫӗрте кирлӗ оборудовани, экскаваторсем, компрессорсем, электрооборудовани, пиравӑр, ӑтӑ-пушмак, апат-ҫимӗҫ тата полиграфи промышленноҫӗнче кирлӗ оборудовани, тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем, тӗрлӗрен станоксемпе инструментсем кӗреҫҫӗ.

Суту-илӳ ҫинчен тунӑ килӗшӳ ҫине алӑ пуснипе пӗрлех икӗ енӗ Совет Союзӗн Индири Суту-илӳ представительствине тата унӑн статутне тӑвасси, Совет Союзӗ техникӑлла пулӑшу парасси ҫинчен пӗр-пӗрин хушшинче ҫырусем улӑштарнӑ. Индие, совет оборудованине илсе пынӑ май, Совет Союзӗ техникӑлла пулӑшу парать.

Килӗшӳ ҫине СССР енчен Совет Союзӗн Индири Посолӗ М. А. Меньшиков, Инди енчен—Суту-илӳпе промышленность Министрӗн пӗррӗмӗш заместителӗ Айенгар алӑ пуснӑ.

Государствӑна кантӑрпа йӗтӗн вӑрлӑхӗ памалли плана тултарнӑ

Ноябрӗн 30-мӗшӗ тӗлне республикӑри колхозсем государствӑна контрактаци йӗркипе кантӑр вӑрри памалли ҫулталӑкри плана 113,7 процент, йӗтӗн вӑрлӑхӗ памалли плана 102,2 процент тултарчӗҫ.

Кантӑр вӑрри памалли плана тултарас тӗлӗшпе Красноармейски районӗнчи колхозсем малти вырӑна тухнӑ, вӗсем хӑйсен обязательствине 270 процент пурнӑҫланӑ.

Ҫавӑн пекех, Вӑрнар, Канаш, Сӗрпӳ районӗсенчи колхозсем вӑрри памалли плана 150 пуҫласа 190 процента ҫитиччен тултарнӑ.

Кашни амаран—17-шер ҫура

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси енӗпе лайӑх тӗслӗх кӑтартать. Уйрӑмах сыснасем ӗрчетес енӗпе пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Колхоз сыснасем ӗрчетмелли плана ҫултан-ҫул иртерсе тултарать.

Районти «Сӗнтерӳ ҫулӗ» хаҫат ҫапла ҫырать:

«Кӑҫал колхозниксемпе колхозницӑсем социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнса обязательствӑсем илнӗ чухне Чапаев ячӗпе тӑракан колхозри свинаркӑсем кашни сысна аминчен 14-шар ҫураран илме сӑмах пачӗҫ. Ҫак обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫланчӗ. Пӗлтӗр кашни амаран 15-шер ҫура илсе республикӑра малта пыракан свинаркӑсен шутне тухнӑ Анна Кудряшова юлташ кӑҫал тата лайӑхрах ӗҫлерӗ. Вӑл 7 амаран 122 ҫура илчӗ, ку вӑл кашни амаран 17-шер ытла пини пулать. Ҫавӑн пекех пӗрле ӗҫлекен Перасковия Еремеева, Матрена Еремеева свинаркӑсем те амаран 17-шер, 16-шар ҫура илнӗ...»

Лавккара таса мар

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Мӑн Шетмӗ ялповӗн лавккинче примус сунать. Ун ҫинче хуралса кайнӑ чейник ларать. Чейникри эрех ӑшӑнсан продавец стакансем ҫине тултарчӗ.

— Юлнӑ укҫапа 200 грамм премӗк виҫсе пар,—терӗ эрех ӗҫекенсенчен пӗри.

Продавец шут шӑрҫине шак-шак шутарласа илчӗ те, хӑрӑмланнӑ чейнике тытса хуралнӑ аллине кӗрӗк аркипе кӑшт-кӑшт шӑлкаларӗ, унтан ещӗкрен йӗкӗр ывӑҫпа кӑларса премӗк виҫсе пачӗ.

Ун хыҫҫӑн пӗр ҫын валли шурӑ пусма виҫрӗ те хуҫлаткаласа тыттарчӗ. Тавар илекене ҫакӑ килӗшмерӗ, вӑл пусмана салатрӗ, типтерлӗ майлама тытӑнчӗ. Унччен те пулмарӗ—пусма ҫинче таса мар пӳрнесен йӗрӗсене курах кайрӗ.

— Вараланчӑк пусмана мӗнле киле илсе пыратӑн, урӑх виҫсе парӑр,—ыйтать вӑл продавецран.

—Вӑл пусма ӗлӗкех таса мар пулнӑ, уншӑн эпӗ айӑплӑ мар,—тесе ответлет продавец.

Лавккара таварсене йӗркеллӗ вырнаҫтарса хуман, хӑшпӗр япаласен хакӗсене ҫырса ҫакман, пусма таварсен хакӗсене вара тӗркесем хушшине ҫынсене курӑнмалла мар хӗстерсе хунӑ.

Лавкка чӳречисене нумайранпа ҫуса тасатман. Примус ҫуннӑ вӑхӑтра лавккара тӗтӗм тулли пулать, ҫын пичӗ тӗксӗмӗн кӑна курӑнать. Стенасем тата мачча хура мунчари пек таса мар.

Г. ЗАХАРОВ.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстермелли резервсем

Республикӑри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнче ӗҫлекенсем, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тултарассишӗн, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, хакне йӳнетессишӗн ӑмӑртаҫҫӗ. Нумай предприятисен коллективӗсем Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнӑ ятпа илнӗ обязательствӑсене чыслӑ пурнӑҫларӗҫ.

Шупашкарти макарон фабрики кӑҫалхи вунӑ уйӑхра планран иртерсе 1,2 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑларчӗ, виҫӗ тонна ытла ҫӑнӑх перекетленӗ. Сакӑр бригада пысӑк пахалӑхлӑ продукци туса кӑларакан бригада ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Христоусова, Борисова, Тарасова, Андреева юлташсем ӗҫ нормине тӑтӑшах 130—140 процент тултарса пыраҫҫӗ, паха продукци ҫеҫ туса кӑлараҫҫӗ. Чылай работницӑсем икшер е ытларах професси туяннӑ. Фабрика ҫӗнӗ йышши изделисем туса кӑларма тытӑннӑ. Виҫҫӗмӗш кварталта фабрикӑра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 16,6 процент ӳснӗ. Ҫав кварталта паха тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн фабрика коллективӗ Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗпе Чӑвашоблпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Шупашкарти сӑра завочӗ продукци туса кӑлармалли ҫулталӑкри плана ноябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ, тӑватӑ тонна ытла чӗртавар перекетлерӗ. Юлашки вӑхӑтра завод сӑра пахалӑхне лайӑхлатрӗ. Халӗ кунта икӗ йышши сӑра, сакӑр йышши тутлӑ шыв туса кӑлараҫҫӗ. Ҫӗнӗ оборудовани лартнӑ хыҫҫӑн завод ӗлӗкхинчен 30 процент ытларах сӑра туса кӑларма тытӑнчӗ. Михайлова, Егожева, Максимова, Павлова юлташсем ӗҫ нормине тӑтӑшах 130—150 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Чылай хуласемпе районсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем пулӑ тытакан бригадӑсем производство планне уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑ тултараҫҫӗ. Кӑҫалхи 10—уйӑх хушшинче Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан предприятисем планран иртерсе 4,2 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. Ӗҫсыннисем валли планран иртерсе чылай макарон, сӑра, тутлӑ шывсем, канфетсемпе премӗксем туса кӑларнӑ.

Анчах асӑннӑ тӗслӗхсем республикӑри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнче усӑ курман резервсем ҫуккине пӗлтермеҫҫӗ. Предприятисен, трестсен руководителӗсем тата министерство работникӗсем пуҫарулӑрах ӗҫлесен, халӑх валли паха апат-ҫимӗҫ миллионшар тенкӗлӗх нумайрах туса кӑларма пулать. Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет правительстви апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнче ӗҫлекенсем умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем лартрӗҫ. Ҫав задачӑсене чыслӑ пурнӑҫлас тесен, производствӑри резервсемпе, вырӑнти чӗртаварпа туллинрех усӑ курмалла, рабочисен, инженерсемпе техниксен ӑсталӑхне тӑтӑшах ӳстермелле, малта пыракансен опычӗпе меслетне анлӑ сармалла.

Ҫак статьяра эпир хӑшпӗр резервсем пирки чарӑнса тӑрасшӑн. Крахмалпа патока трестне пӑхӑнса тӑракан заводсем ҫулталӑкра тӑват-пилӗкшер уйӑх ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен ҫулсеренех тенӗ пек сентябрь уйӑхӗн 15—20-мӗш кунӗсенче ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Пирӗн республикӑра ҫӗрулми иртерех ӑлкӗрет. Заводсем сезона икӗ эрне маларах тытӑнсан та халӑх валли 500 тонна ытла крахмал, патока тата саго кӗрпи туса кӑларма пулать. Ҫӗрулмине иртерех кӑларса заводсене парас ӗҫе пуҫарни ҫеҫ кирлӗ. Суркӳпне колхозсемпе колхозниксен ҫулсеренех чылай ҫӗрулми сутаҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫуркуннне Йӗпреҫри патока завочӗ чылай ҫӗрулми ҫухӑн илсе хатӗрлерӗ, ҫав чӗртаварпа патока сахал мар туса кӑларчӗ. Ытти заводсен руководителӗсем ҫав паха майпа усӑ курмарӗҫ. Правительство ялхуҫалӑх продукчӗсен хакне ӳстернӗ хыҫҫӑн колхозсемпе колхозниксем ӗлӗкхинчен нумай ытларах ҫӗрулми сутма пуҫларӗҫ. Ҫапла вара крахмалпа патока тӑвакан заводсен чӗртавар бази ҫирӗпленчӗ. Ӗлӗкрех крахмалпа патока тӑвакан заводсем сезон вӗҫленнӗ-вӗҫленмех оборудование юсама тесе салатса пӑрахатчӗҫ. Малашне вӗсен ҫак йӑлана пӑрахмалла, май тата июнь уйӑхӗсенче ӗҫлеме хатӗр пулмалла.

Технологи процеспе тӗрӗс йӗркелемен, ҫӗрулмине лайӑх пӑхса усраман пирки заводсем ҫулсерен пысӑк тӑкаксем тӑваҫҫӗ. Халӗ заводсем ҫӗрулминчи 76 процент крахмалпа усӑ кураҫҫӗ. Малта пыракан предприятисенче 80 процент кӑлараҫҫӗ. Чылай ҫӗрулми ҫӗрсе тата шӑнса сая каять, производство каяшӗнче крахмал нумай юлать. Ҫӗрулминчен пӗр процент ытларах крахмал кӑларсан та халӑха ҫулсерен нумай ытларах продукци пама пулать. Крахмалпа патока треснчӗн (управляющийӗ Ефимов юлташ) тата заводсен руководителӗсен чӗртаварпа лайӑхрах усӑ курма пулӑшакан организацилле-техникӑлла ӗҫсем туса иртермелле, крахмал тумалли сезона тӑсма тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Пӗр тонна чӗрӗ крахмал туса кӑларма 3,5 тонна яхӑн ҫӗрулми кирлӗ. Ҫӗрулми инҫетрен турттарса транспорт тӗлӗшӗнчен пысӑк расходсем тӑвас мар тесе, Сӗнтӗрти, Кувакинӑри, Вӑрнарти тата Шӑмӑршӑри апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенче чӗрӗ крахмал тӑвакан цехсем уҫнӑ. Чӗрӗ крахмалтан патока, кӗсел пӗҫерме, типӗтнӗ крахмал тума пулать. 1953—1954 ҫулсенче Чурачӑкри тата Элӗкри апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенче крахмал тӑвакан механизациленӗ цехсем лартма палӑртнӑ. Ҫапла вара республикӑра крахмалпа патока туса кӑларасси малалла аталанать.

Колхозсем ҫулсеренех пахча ҫимӗҫ нумай акса-лартса пухса илеҫҫӗ. Тӑварланӑ хӑяр, помидор, йӳҫӗтнӗ купӑста—ӗҫсыннисен юратнӑ апат-ҫимӗҫӗ. Уйрӑмах ҫав апат-ҫимӗҫсем хулара тата рабочисем пурӑнакан поселоксенче нумай кирлӗ.

Кӑҫал апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем хӑяр, помидор тата купӑста пурӗ те 208 тонна ҫеҫ тӑварланӑ. Пахча ҫимӗҫ ытларах тӑварлама савӑт-сапа ҫитменни чӑрмантарать. Хранилищӗсемпе нӳхрепсем те сахал. Апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен ҫитес сезон валли каткасем ҫителӗклӗ хатӗрлесе хумалла, нӳхрепсем, хранилищӗсем нумайрах тума тӑрӑшмалла.

Кӑҫал Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ вӑрманта 50 центнер ытла ҫырла, чылай кӑмпа хатӗрлерӗ. Ытти нумай предприятисем вара вӑрманта ӳсекен паха ҫимӗҫсемпе кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ. Кашни апат-ҫимӗҫ комбиначӗ сезонта 20—30-шар центнер ҫырла хатӗрлесен те республикӑра мӗн чухлӗ паха варени, повидло, джем туса кӑларма пулать.

Апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем пахча ҫимӗҫ чылай типӗтеҫҫӗ. Анчах нумай ҫӗрте ҫак ӗҫе алӑпа тӑваҫҫӗ. Ҫавӑн пирки ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ, хӑшпӗр чухне продукци пахалӑхӗ япӑх пулать. Кӑҫал Вӑрнарти комбинатра ҫӗрулмине ҫумалли, шуратмалли, пахча ҫимӗҫ турамалли оборудовани вырнаҫтарса лартнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 5—7 хут ӳснӗ, продукци пахалӑхӗ лайӑхланнӑ, производство культури хӑпарнӑ. Ҫакна шута илсе, 1954 ҫулта Ҫӗмӗрле, Калинино, Советски тата Кувакино апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенче те пахча ҫимӗҫ типӗтекен цехсене механизацилеме палӑртнӑ. Ҫавна пурнӑҫлама хӑшпӗр йышши оборудовани туяннӑ та ӗнтӗ.

1954 ҫулта Етӗрнери апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче улма-ҫырларан тата пахча ҫимӗҫрен консервсем туса кӑларакан цех лартма палӑртнӑ. Ҫав цех ҫулталӑкра 100 тоннӑна яхӑн паха продукци туса кӑлармалла.

Шупашкарти кондитерски фабрики 1943 ҫултанпа ӗҫлет. Унтанпа чылай ӗҫсене механизациленӗ. 25 станок вырнаҫтарса лартнӑ. Халӗ вӑл, 1943 ҫулхипе танлаштарсан, пилӗк хут нумайрах продукци туса кӑларать. Анчах кунта технологи процесне ҫӗнетсе лайӑхлатма производство сурчӗсем ҫитмеҫҫӗ. 1954 ҫулта фабрика ҫуртне икӗ хутлӑ тума палӑртнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ҫӗнӗ машинӑсем лартма, продукци нумайрах туса кӑларма май пулать.

Чылай апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем премӗк, канфет, печени пӗҫереҫҫӗ. Унта ӗҫе механизацилемен, продукци пахалӑхӗ начар. Правительство йышӑннӑ тӑрӑх, Канаш хулинчи апат-ҫимӗҫ комбинатне ҫӗнетсе пысӑклатмалла, ун хӑвачӗ ҫулталӑкра 1.000 тонна таран кондитер таварӗсем туса кӑлармалла пулать. 1954 ҫулта 30 станок вырнаҫтарса лартаҫҫӗ, производство процесне пӗтӗмпех механизацилеҫҫӗ. Етӗрне, Куславкка, Чкаловски тата Пӑрачкав апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенче ҫӑкӑрпа булка тата кондитер ҫимӗҫӗсем пӗҫерес ӗҫе чылай механизацилеҫҫӗ.

Тутлӑ шывсем туса кӑларасси ҫултан-ҫул ӳсет. Кӑҫал Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче ҫулталӑкра 10 пин гектолитр шыв туса кӑларакан цех уҫнӑ. Апла пулин те апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ хулари ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерейместь. 1954 ҫулта Ҫӗмӗрлери апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче ҫӗнӗ цех ӗҫлеме тытӑнать. Шупашкарти апат-ҫимӗҫ комбиначӗ улма-ҫырла шывӗ туса кӑларма тытӑнать.

Сӳлерех макарон фабрикипе сӑра завочӗн паха тӗслӗхӗсене палӑртнӑччӗ. Ҫав малта пыракан предприятисенче те продукци туса кӑларассине ӳстермелли майсем сахал мар. Макарон фабрикинче тепӗр пресс лартсан (ун валли вырӑн пур) тата макарон типӗтмелли ҫӗнӗ йышши шкафсем туянсан, фабрика хӑвачӗ 20 процент таран ӳсет, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, вӑл пилӗк хут нумайрах продукци туса кӑларма пултарать.

Асла пӗҫермелли хурансене улӑштарса вӗсем вырӑнне пысӑкраххисене лартсан, сӑра завочӗ ҫулталӑкра 30 пин декалитр сӑра нумайрах туса кӑларма пултарать. Кунта сӑрана сивӗтме аммиаклӑ холодильник тумма палӑртнӑ.

Шупашкарта ҫӗнӗ сӑра завочӗ палӑртнӑ. Ҫав завод ҫулталӑкра 6... лион литр сӑра туса кӑлармалла... ҫулта ку завода тума тытӑнаҫҫӗ...

Юлашки ҫулсенче чылай ... ҫӗнӗ оборудованипе пуянлатнӑ... публикӑри армансем авӑртса... кан пысӑк пахалӑхлӑ соя ҫӑнӑхне... на, Горький тата Куйбышев хулинчен... ӑсатаҫҫӗ. Халӗ шурӑ ҫӑнӑх нумай... таҫҫӗ. Пилӗкҫуллӑхра Ҫӗмӗрле... талӑкра 50 тонна ҫӑнӑх авӑртакан... ман, Улатӑр хулинче талӑкра ... на кӗрпе тӑвакан цех лартма... Армансен хӑвачӗ пысӑк. Анчах... тресчӗпе арман директорӗсем колхоз... колхозниксен тыррине ытларах... ҫӑнӑх пахалӑхне лайӑхлатма тивӗҫлӗ... рӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Уйрӑмах... тата Етӗрне районӗнчи Сарьялӗнчи... сем япӑх ӗҫленине палӑртас пул... рудование вӑхӑтра тата паха... пе, директорсемпе механиксем... туйса ӗҫлеменнипе асӑннӑ арман... часах хупӑнса лараҫҫӗ.

Етӗрнери ҫу тата олифа... завод продукци туса кӑлармалла... на, продукцин хӑйне лараканне... йӳнетмелли задание ӑнӑҫлӑ тул... рать. Кӑҫалхи тӑхӑр уйӑх хушшинче... центнер ҫу перекетленӗ. Нумай... масть Ижановпа Соколова мастер... ытларах кӑлармалли паха сӗнӳ... вод коллективӗ кивӗ прессем... шнеклӑ прессем лартма палӑртнӑ... пурнӑҫласан, завод хӑвачӗ ӳсет.

Республикӑри юханшывсем... че пулӑ нумай, халӑх ыйтӑвӗсене... рах тивӗҫтерес тесен, пулӑ тытакан колхозсемпе пулӑ тресчӗн руководителӗсем... пуҫарулӑ пулни, малта пыракан... летне анлӑ сарни ҫеҫ кирлӗ.

Предприятисенчи резервсене... чӗртавар базине ӳстерес тӗлӗшпе... стерствӑн те тимлӗрех ӗҫлемелле...

В. ...

Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствин производствӑпа ... пайӗн ...

Колхозсем, совхозсем, дояркăсем хушшинче сĕт тухăçлăхне ўстерессишĕн пыракан социализмла ăмăрту

(Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне)

(Малалли. Пуçламăшĕ 235-мĕш номерте).

Йышăннă вырăн	Дояркăсен хушамачĕсем	Район, совхоз, колхоз ячĕсем	Кашни ĕнерен сĕт суса илнĕ (килогрампа):
32.	А. П. Петрова	Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.809
33.	П. И. Муравьева	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.805
34.	Н. Я. Яковлева	Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.798
35.	Т. Ф. Филиппова	Çĕрпў районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	1.796
36.	А. И. Леднева	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	1.793
37.	А. Ф. Ванюшина	Пăрачкав районĕнчи «Ударник» колхоз	1.785
38.	М. К. Степанова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.781
39.	А. Е. Ферапонтова	Çĕрпў районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	1.776
40.	Л. Сергеева	Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.751
41.	Ф. И. Портнова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.733
42.	М. П. Чермакова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.718
43.	А. Т. Титова	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.714
44.	Е. М. Столярова	Пăрачкав районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	1.709
45.	Т. П. Братанова	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	1.683
46.	У. В. Галкина	Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	1.680
47.	А. Ф. Филиппова	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	1.666
48.	А. Н. Александрова	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	1.664
49.	М. В. Шарова	Пăрачкав районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	1.664
50.	К. А. Грешнева	Пăрачкав районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхоз	1.648
51.	Н. Е. Пугачева	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.639
52.	А. Д. Макеева	Пăрачкав районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	1.637
53.	Р. К. Кириллова	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.634
54.	М. В. Александрова	Пăрачкав районĕнчи «Ударник» колхоз	1.629
55.	З. К. Кириллова	Çĕрпў районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	1.626
56.	М. В. Силантьева	Çĕрпў районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	1.621
57.	З. Н. Иванова	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	1.621
58.	Р. Симбирская	Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» колхоз	1.614
59.	Е. К. Кузьмина	Çĕрпў районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	1.595
60.	О. А. Александрова	Çĕрпў районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	1.586
61.	Ф. А. Даутова	Чкаловски районĕнчи «Кзыл юлдус» колхоз	1.583
62.	А. Т. Мразова	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.582
63.	Т. Н. Слесарева	Муркаш районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз	1.570
64.	Ф. К. Шумкова	Ишлей районĕнчи «Знамя труда» колхоз	1.567
65.	М. А. Яргеева	Ишлей районĕнчи «Знамя труда» колхоз	1.566
66.	Т. К. Борисова	Çĕрпў районĕнчи «Новая жизнь» колхоз	1.562
67.	Е. И. Шмарина	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	1.554
68.	Л. В. Храмова	Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз	1.538
69.	Т. Андреева	Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.523
[illegible]	[illegible] Макеева	Пăрачкав районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	1.517
[illegible]	[illegible] Тодипова	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.516
[illegible]	[illegible] Головина	Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз	1.512
[illegible]	[illegible] Спиридонова	Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз	1.505
[illegible]	[illegible] Орлова	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.482

(Юлашки пулать).

Социализмла ялхуçалăхĕ валли

Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан завод кăçал производство планне тултарас енĕпе татăклă улшăну турĕ. Пĕррремĕш кварталти ĕç итогĕсем тăрăх, завод СССР Ялхуçалăх министерствин предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăн, иккĕмĕш кварталта—иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Виççĕмĕш кварталти плана ăнăçлă тултарса, завод Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене завод коллективĕ пысăк çĕкленупе кĕтсе илчĕ. Çак постановленипе тата партипе правительство йышăннă решенисенче ялхуçалăхĕн кал юлнă отраслĕсене çĕклемелли программăна кăтартса панă. Социализмла ялхуçалăхне малалла çĕклесси, тырпул тухăçлăхĕпе вылăх-чĕрлĕх тупăшлăхне ўстересси пĕтĕм халăх задачи пулса тăчĕ.

Çав пысăк задачăсене татса парасси Ялхуçалăх министерствин предприятийĕсем ăнăçлă ĕçленинчен чылай килет. Пирĕн завод МТС-сем валли куçса çўрекен автомастерскойсем тăвас ĕçре пысăк вырăн йышăнмалла. СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Машина-трактор станцийĕсен ĕçне малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире каланă тăрăх, 1954—1955 çулсенче куçса çўрекен 18 пин автомастерской тумалла. Вĕсенчен нумайăшне Çĕмĕрлери заводра туса кăлармалла. Çак пысăк задача пĕлтерĕшне ăнланса илсе, завод коллективĕ Пленум решенийĕсене пурнăçлассишĕн ырми-канми кĕрешме сăмах пачĕ.

Рабочисем хăйсен сăмахне тўрре кăларса пыраççĕ. Султалăкри плана срокчен, ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕччĕ. Завод коллективĕ хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçларĕ: çулталăкри плана ноябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарчĕ. Завод 10 уйăх хушшинче государствăна 2.200 тенкĕ тупăш пачĕ.

Заводра социализмла ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Эпир ăмăрту итогĕсене сийĕнчех пĕтĕçтерсе тăрăшатпăр. Иртнĕ кунхи ĕç итогĕсем тепĕр кунне ирхинех паллă пулаççĕ. Мала тухакансен ячĕсене Хисеп хăми çине çыраççĕ тата вĕсен çитĕнĕвĕсене «çиçĕм» хаçатсем сўтатаççĕ.

Социализмла ăмăртура рабочисем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. 2 çул та 10 уйăх хушшинче 57 çын 5 çул е 8 çул нормине тата унтан та ытларах тултарнă. Уйрăмах И. Автаевпа И. Цирулин шоферсем, С. Юдинпа В. Дерябин слесарьсем, И. Киселевпа С. Володин столярсем, заводри чи ватă рабочи А. Сидоров юлташ малта пынине палăртмалла. Кăçалхи 10 уйăх хушшинче 240 рабочи ытла çулталăкри заданисене ирттерсе тултарчĕç.

Цехсем хушшинчи социализмла ăмăртура пĕрремĕш цех мала тухрĕ. Çак цех комбайн деталĕсем пухмалли çулталăкри плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕ. Пĕлтĕр ку цех 440 пин деталь туса кăларнă пулсан, кăçал 848 пин деталь хатĕрлерĕ те ĕнтĕ. В. Петров, Е. Шачкова, А. Масленкова, В. Митрофанова, А. Щеглова т. ыт. станочниксем комбайн пайĕсем тумалли сменăри нормăна 200—250 процент тултараççĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Н. Кутлеев юлташ ĕçре паха тĕслĕх кăтартать. Вăл заводри чи лайăх стахановецсенчен пĕри шутланать, улăм транспортерĕн планкисене нормăпа 600 штук вырăнне 1.325 штук туса кăларать.

Завод ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе дирекцие пуçламăш парторганизаци организацилле-техникăлла ĕçсем туса ирттерчĕç. Цехсен начальникĕсемпе мастерсен рольне палăрмаллах ўстернĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ, хăйсен пĕлĕвĕсене ўстерес тесе, технибумсемпе институтсенче заочно вĕренеççĕ. Унсăр пуçне, заводра производство командирĕсен экономикăлла пĕлĕвĕсене ўстермелли кружок ĕçлет. Техникăлла тĕрĕслў пайĕнче ĕçлекен контролерсем валли уйрăм кружок тунă.

Рабочисен квалификацине ўстермесĕр продукци пахалăхне лайăхлатма май çук. Çавна шута илсе, рабочисене пурне те техникăлла вĕренĕве хутшăнтарнă.

Заводри рационализаторсем материалсене перекетлеме пулăшакан нумай сĕнў сем пачĕç. Вĕсем детальсен хăйне хакăн хакне йўнетме, тупăш нумай илме май пачĕç.

Конструктор М. Клячвин тата главнăй механик Е. Иванов юлташсем çĕнĕ станок тума сĕнчĕç. Вĕсен чертежĕсем тăрăх В. Дерябинпа К. Чупраков стахановецсем станок турĕç. Çĕнĕ станок темиçе ĕçе пĕр вăхăтрах тума май пачĕ. Унта кирек хăш виçеллĕ детале те якатса, касса тата тата шăтăк пăралама пулать. Çакла тунипе детальсем тунă çĕрте ĕç тухăçлăхне тăватă хут ўстерме тата 41.500 тенкĕ укçа перекетлеме май пачĕ.

Заводри рационализаторсем 10 уйăх хушшинче ĕçе лайăхлатма пулăшакан сĕнўсем çĕр ытла пачĕç. Вĕсенчен чылайăшне ĕçе кĕртнĕ. Çакă 480 пин тенкĕ ытла укçа перекетлеме пулăшрĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче завод МТС-сем валли куçса çўрекен мастерскойсем 2.645 туса кăларчĕ. 1954 çулта рабочисен халăхи йышĕнех 2 пин мастерской туса кăлармалла пулать. Халĕ рабочисем темиçе профессие вĕренессишĕн ăмăртаççĕ. Çак ăмăртăва 3-мĕш цехри комсомолецсем пуçарчĕç. Н. Зеленова—10 станокпа, М. Елфуткина—8 станокпа, А. Пиманова—9 станокпа, А. Радостина—6 станокпа ĕçлеме вĕренсе çитме пулчĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне ĕçре пурнăçласа пыраççĕ. Халĕ заводра кашни сакăр рабочирен пĕри темиçе ĕç тума хăнăхса çитрĕ. Ку вăл рабочисен халăхи йышĕнех пысăкрах плана пурнăçлама тата продукци пахалăхне лайăхлатма май парать.

Эпир мастерской конструкцине те чылай улăштартăмăр. Çĕнĕ конструкципе туса кăларнă мастерскойна ытларах вăхăт хушши усă курма пулать, кузов йывăрăшне чакарнă май, ун çине юсав ĕçĕнче кирлĕ оборудовани 200 килограмм ытларах тата ытти материалсем нумай тиеме пулать. СССР Ялхуçалăх министерстви çĕршыври пур предприятисенче те мастерскойсене пирĕн завод конструкцийĕпе туса кăларма йышăнчĕ. Çак конструкципе усă курни пирĕн завода кăна килес çул 500 пин тенкĕ перекетлеме май парать.

Эпир халĕ хамăр умма ĕçе лайăхрах организацилес, производство технологине лайăхлатас, вăй нумай кирлĕ ĕçсене механизацилес задача лартрăмăр. Çав ĕçсене туса ирттерсен, коллектив килес çулхи пысăкрах плана чыслăн тултарма тата ирттерсе тултарма пултарать. Вăл çавăн пек пулмалла та.

Кунсăр пуçне, Мускаври Яблочков ячĕпе тăрабан завод валли электроприбор колонкисем тума килĕшсе татăлнă, колхозсем валли 350 парник рами тума йышăннă.

Халăха кирлĕ япаласем туса кăларма тытăннă. Халĕ 200 яхăн парник рами, 50 этажерка, электроприбор колонкисем 1.900 туса кăларнă та ĕнтĕ. Куллен кирлĕ таварсем тунă çĕрте рабочисем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Парник рами тунă çĕрте В. Елфутин, А. Васенин, А. Рубцов юлташсем задание 200 процент, П. Кузнецов, И. Шапошников, И. Миронов слесарьсем—150—200 процент тултараççĕ.

Пирĕн завод коллективĕ ялхуçалăх заказĕсене пысăк хастарлăхпа пурнăçласа пырать.

А. РУСИН,
завод директорĕ.
И. ПРОНИН,
партбюро секретарĕн заместителĕ.

Улатăрти пăравуссем юсакан заводра

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Улатăрти пăравуссем юсакан заводăн механически цехĕнчи токарь Мария Турдакова. Вăл кулленех ĕç нормине пĕрмаях ирттерсе тултарать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоўкерчĕкĕ.

РАЦИОНАЛИЗАТОРЛА ПАХА СĔНЎСЕМ

Халиччен заводра пăравуссен юсанă çĕрте кирлĕ пулакан пĕр йышши шурупсене тимĕрçĕсен цехĕнче машинпе уйрăм касса хатĕрленĕ. Шабрашин инженерпа Заблинов мастер тата Федосеев токарь, виççĕшĕ пĕрле ĕçлесе, çакăн пек шурупсене нумай туса кăлармалли çĕнĕ меслет тупнă. Вĕсем хурçă шурупа касмалли хатĕр тунă. Вăл пĕр секунтра 110 метр тăршшĕ хурçă винт касма пултарать. Çак паха сĕнĕве пурнăçласа, завод кăçал 710 килограмм хаклă йышши хурçă, 4.000 тенкĕ укçа перекетлет.

Кăçал заводра инженерсемпе техниксем тата рабочисем рационализаторла 69 сĕнў панă. Вĕсенчен 28 сĕнĕве пурнăçа кĕртнĕ. Çакă завода ĕç тухăçлăхне ўстерме, чĕртаварпа укçа-тенкĕ нумай перекетлеме май парать. Халĕ тата вунă сĕнĕве пурнăçа кĕртсе çитереççĕ.

Кунсăр пуçне заводра технологи процесĕпе техникăлла приспособленисене лайăхлатмалли 65 сĕнĕве пурнăçланă. Çакă завода çулталăкра 25 тонна хура металл, 18 тонна тĕслĕ металл перекетлеме май парать.

Рационализаторла паха сĕнўсем парассем хушшинче И. Артомонов слесарь, М. Лазарев электромонтер, В. Волков токарь-наладчик тата ыттисем те пур.

РАБОЧИСЕМ ВАЛЛИ ÇĔНĔ ÇУРТСЕМ

Заводра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем тата инженерсемпе служащисем валли пурăнмалли çĕнĕ çуртсем тăвасси çултан-çул сарăлса пырать. Халĕ кунта тăватă тата сакăр хваттерлĕ темиçе çурт туса пĕтернĕ. Çитес çулсенче çĕнĕ поселок пулмалла.

Кăçал туса пĕтернĕ çичĕ пўрте темиçе çемье пурăнма куçнă. Механически цехри долбежник В. Яшин, сборочнăй цехри М. Гущарин, М. Безбородов слесарьсем, тендернăй цехри Н. Куторкин котельщик, çамрăк инженер-нормировщик Н. Сорокин, сборочнăй тата тимĕрçĕ цехĕсен начальникĕсем П. Петинпа А. Максимов тата ыттисем те икшер-виçшер пўлĕмлĕ çĕнĕ хваттерсене пурăнма куçрĕç.

ПРОФСОЮЗ ПАНĂ ПУТЕВКĂСЕМПЕ

Партипе правительство ĕççынисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ, укçа-тенкĕ нумай параççĕ. Заводра ĕçлекенсен социальнăй страховани енĕпе пулăшу тата пенсисене пособисем, апат-çимĕçе лайăхлатма, кăкăр ачисене пăхма укçа-тенкĕ нумай илеççĕ. Çавна валли вунă уйăх хушшинче 400 пин тенкĕ ытла укçа расходланă.

Çак вăхăт хушшинче профсоюз завкомĕ тĕрлĕ курортсемпе санаторисене кайма 21 çынна, канмалли çуртсене кайма 32 çынна путевкăсем панă. Вĕсенчен çичĕ çынна путевкăсене пĕр тўлевсĕр панă.

Юлашки кунсенче котельнăй цехри слесарь-контролер А. Веляшов Трускецри санаторие, механически цехри А. Ожигов слесарь Хусанти санаторие тухса кайрĕç. Котельнăй цехри слесарь-стахановец П. Сергиевский канмалли çуртран килчĕ. Халĕ вăл сменăри заданине яланах ирттерсе тултарать.

ÇАМРĂК РАБОЧИСЕМ ВĔРЕНЕÇÇĔ

Электромонтер пулса ĕçлекен А. Дурасов завода темиçе çул каялла килсе кĕнĕ. Вăл специальноçа лайăх вĕренсе çитнĕ. Анчах унăн вĕтам пĕлў илсе малалла вĕренес ĕмĕт пулнă. Çавăнпа чугун çул çинче ĕçлекен рабочисен вĕтам шкулне вĕренме кĕнĕ. Кăçал вăл 8-мĕш класра вĕренет. Заводра лайăх ĕçленĕ вăхăтрах вĕренўре те лайăх ăнăçса пырать. Вĕренў çулĕн пĕррремĕш чĕрĕкне пур предметсем тăрăх та лайăх паллăсем илнипе вĕçленĕ.

Çак шкулта заводри 28 çамрăк рабочи вĕренет. Унсăр пуçне хуларн вĕтам шкулта вунă рабочи вĕренет. С. Деркипкин слесарь, А. Минеев модельщик, Н Яковлев слесарь, В. Куньков электросварщик, Н. Мелихин газосварщик тата ытти чылай çамрăк рабочисем ĕçпе вĕренĕве пĕрле çыхăнтарса пыраççĕ.

КВАЛИФИКАЦИЕ ЎСТЕРЕÇÇĔ

Завод çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Кунта Тăван çĕршывра туса кăларнă чи паха йышши станоксем, тĕрлĕ оборудовани чылай илсе килнĕ. Вĕсемпе тухăçлăн та пĕр чăрмавсăр ĕçлеме ăста рабочисем кирлĕ. Çавна май рабочисем хăйсен квалификацине, техникăлла пĕлĕве ўстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Стахановла шкулсенче вĕрентсе квалификацие ўстермелли çулталăкри задание ытлашшипех тултарнă. Чылай рабочисем икĕ профессие вĕренеççĕ. Опытлă рабочисем хăйсен ĕç опытне çамрăк рабочисене парассине лайăх йĕркеленĕ. Тендернăй цехри ватă рабочи Н. Миронов слесарь кăçал пĕччен ултă çамрăка ăста слесарьсем пулма вĕрентнĕ. Çавăн пекех сборочнăй цехри А. Ситов слесарь, А. Бурмистров котельщик, И. Верещагин фрезеровщик тата ыттисем те темиçешер çамрăка хăйсен паха ĕç опытне вĕрентнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен сменăри заданийĕсене яланах ирттерсе тултараççĕ.

ХĔРЛĔ КĔТЕСРЕ

Завод территоринчи уйрăм çуртра хĕрлĕ кĕтес вырнаçнă. Кунта рабочисемпе работницăсем кулленех нумай пулаççĕ. Вĕсем лекцисемпе докладсем итлеççĕ, кружоксенче вĕренеççĕ. Çак кунсенче кунта «Революцилле законлăх», «Этем пурнăçне вăрăмлатасси» тата ытти темăсем тăрăх лекцисем пулнă, вĕсене çĕршер çын итленĕ.

Хĕрлĕ кĕтесре художествăлла пултарулăх коллективĕсем ĕçлеççĕ. Струннăй оркестр, хор коллективĕсем час-часах концертсем параççĕ. Кружоксенче рабочисемпе работницăсем нумай тăраççĕ.

Кунта пуян библиотека пур. Унтан çĕр çынна яхăн кĕнеке илсе вулать. Литейнăй цехри О. Минеев рабочи кăçал кĕнекесем нумай вуласа тухнă. Хĕрлĕ кĕтесре вулакансен конференцийĕсем час-часах пулаççĕ. Халĕ кунта 1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕç анлăн сарăлчĕ. Юлашки вăхăтра 200 çын ытла çĕнĕ çулта хаçат-журнал илсе тăма çырăннă.

ФЗО шкулне кайрĕç

[illegible]СКИ. Сталин ячĕпе тăракан [illegible] нумай çамрăксем иртнĕ çулти [illegible] уйăхĕнче Кемерово облаçĕнчи [illegible] вĕренме кайрĕç. Вĕсенчен [illegible] Кекеров юлташ кăçал тăван [illegible] килсе кайрĕ. Вăл килнине [illegible] курма ялти чылай çамрăксем [illegible]. Вĕсем хăйсен юлташĕнчен [illegible] пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕç. [illegible] юлташ çамрăксене ФЗО шкулĕнчи [illegible] тата шахтерсен пурнăçĕ çинчен [illegible] каласа пачĕ.

— Ултă уйăх вĕреннĕ хыççăн,—терĕ вăл,—эпĕ арматурщик специальноçне илтĕм. Халĕ уйăхне 1.500—2.000-шер тенкĕ ĕçлесе илетĕп.

Кăçал призыв пуçлансан, ялти çамрăксем ФЗО шкулне вĕренме кайма кăмăл турĕç. Çак кунсенче П. Ефимов, И. Алемасов, Н. Ефимов, Н. Романов çамрăксем Кемерово облаçĕнчи ФЗО шкулĕсене вĕренме кайрĕç.

В. КОЛПАКОВ.

[illegible]ура

[illegible]шар сураран [illegible]. Çак обязатель[illegible]. Пĕлтĕр кашни [illegible] илсе республи[illegible] свинаркăсен шутне [illegible] юлташ кăçал тата [illegible] 7 амаран 12[illegible] амаран 17-шер [illegible] Çавăн пекех [illegible] асковия Еремеева [illegible] свинаркăсем те [illegible] -шар сура илнĕ[illegible]

[illegible] сăра завоч[illegible] султалăкра 6,[illegible] са кăлармалла [illegible] тума тытăнаççĕ [illegible] чылай [illegible] пуянлатма [illegible] авăртса [illegible] соя çăвăн [illegible] Куйбышев [illegible]

[illegible]атематика урокĕсенче

Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ [illegible]мĕш «Б» класра арифметика [illegible] сумăр. Урок теми—«Пропор[illegible] сырасси». Урока опытлă учи[illegible] Орлова идея тĕлĕшĕнчен [illegible] ирттерчĕ. Вăл вĕренекенсене [illegible]ача пачĕ: «КПСС Централь[illegible]ĕн сентябрьти Пленумĕн по[illegible] тăрăх, колхозсем государст[illegible] килограмм ыраш вырăнне 100 [illegible] куратул тата 125 килограмм [illegible] 100 килограмм вир пама [illegible]. Хăш культура хаклăрах? [illegible] числоран пропорци тума [illegible]

[illegible]асене питĕ интереслентерчĕ, [illegible] икенсех шутлама тытăнчĕç, [illegible] часах шутларĕç.

[illegible] эпир математика урокĕ[illegible] чухне, кĕнекесенче кăтарт[illegible] пĕрлех, паянхи пурнăçпа [illegible] задачăсем шутлаттарни [illegible] çинчен каласшăн. Ун пек [illegible] вĕренекенсене çав тери инте[illegible], вĕсене шкул ачисем юрат[illegible] Кун пек задачăсем ачасен [illegible] ăнне çĕклеççĕ. Вара ачасе[illegible] пурнăçпа тачă çыхăнса [illegible] кăтартса пама пулать. Инте[illegible] ачасем шутлас енĕпе [illegible] хусене аталантарса пыма [illegible] лĕтсе пыма пулăшаççĕ.

[illegible] вылăх-чĕрлĕх йышне [illegible] тухăçлăхне ўстерессе питĕ [illegible] тăрать. КПСС Централь[illegible] сентябрьти Пленумĕ йы[illegible] тăрăх, 1954 çулта [illegible] ĕнесен шутне 29,2 [illegible] çитермелле.

сен шутне 29,2 миллион пуçа çитермелле. Кашни ĕнерен 2.500 килограмм сĕт суса илсен, 1954 çулта пурĕ миçе центнер сĕт суса илме пулать? Пирĕн çĕршыври кашни çынна вăтамран мĕн чухлĕ сĕт тивнĕ пулĕччĕ?»

«Пирĕн çĕршыври кашни çын пуçне..,—шухăшлать ача,—апла пулсан, эпĕ те çак шута кĕретĕп вĕт-ха». Ачана çак шухăш интереслентерсех ярать. Вăл тўрех шутлама тытăнать: 2.500 килограма 29,2 миллион çине хутласан 73.000 миллион килограмм е 730 миллион центнер пулать. Чăнах та, питĕ нумай. «Анчах пирĕн çĕршывра халăх та питĕ йышлă вĕт, кашни çын пуçне мĕн чухлĕ сĕт тивет-ши?» Çакăн пек ыйту хăй тĕллĕнех ача умне тухса тăрать. 73 000 миллион килограма вăл 200 миллион çине пайлать те, тĕлĕнсех каять: 365 килограмм! Кашни çын пуçне çулталăка 365 килограмм сĕт тивет. Чăнах та: çулталăкра 365 кун, кашни çынна кунне — пĕр килограмм сĕт!

Ача çакна хăй шутласа тупать. Пĕр иккĕленмесĕрех калама пулать: вăл ку задачăра тупнă савăнăçне ашшĕ-амăшне каласа памасăр чăтаймастех. Ача-пăча психологийĕ çапла ĕнтĕ. Çук, кун пек савăнăça çитĕннĕ çын та ытти çынсене каласа парĕ. Пирĕн тăван парти пĕтĕм халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшни ку задачăра питĕ лайăх курăнса тăратьçке-ха «Анне,—тейĕ шкул ачи киле таврăнсан,—ĕнесенчен сĕт суса илессине çĕнĕ постановленире кăтартнă шая çитерсен, пирĕн çемье кашни кунах 6—7 литр сĕт илме пултарать (çемьере 6—7 çын пулсан)».

Пурнăшĕп те паллă, шкулта çавăн йышши задачăсем шутлани Пленум постановленине [illegible] [illegible]

[illegible] класра вĕренекен ачасене [illegible] задача парса пăхар: [illegible] пирĕн ялхуçалăхĕ [illegible]

вĕсен çемйисенчи ытти членĕсене те, кўршисене те ăнлантарса пама пулăшать, çывăх çулсенчи пуласлăхпа паллаштарать. Ку телейлĕ пуласлăх вара пирĕн ĕççыннисен чĕринче ăшă туйăмсем çуратать кăна мар, вĕсене çав постановление пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешĕве чĕнет.

Задачăсенче вырăнти тĕслĕхсем илсе кăтартни те питĕ усăллă. Сăмахран, ачасене çакăн пек икĕ задача пама юрать:

«Н. С. Хрущев юлташ докладĕнче Молотов ячĕпе тăракан малта пыракан колхоза асăннă. Ку колхозра кашни 100 гектар çĕр лаптăкĕ пуçне 19 ĕне тивет, кашни ĕнерен çулталăкра 4.200 килограмм сĕт суса илеççĕ. Пирĕн халăха валли сĕт-çу кирлĕ таран пултăр тесен, пур колхозсенче те кашни 100 гектар çĕр лаптăкĕ пуçне 10 ĕне тытмалла, кашни ĕнерен 2.500 килограмм сĕт суса илмелле. Молотов ячĕпе тăракан колхоз кашни 100 гектар çĕр лаптăкĕ пуçне КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ кăтартнă нормăран миçе хут нумайрах сĕт суса илет?»

Ачасене çак задачăри цифрăсемпе çыхăнса тăракан содержанилле задача пани питĕ аван пулнă пулĕччĕ. Сăмахран: «Пирĕн колхоз 2.300 гектар çĕр лаптăкĕ йышăнса тăрать. Колхозра пурĕ 115 ĕне. Кашни ĕнерен çулталăкра вăтамран 1.250 килограм сĕт суса илеççĕ. Пирĕн колхоз Пленум кăтартнă нормăран миçе хут сахалтарах сĕт суса илет? Пленум кăтартнă нормăна тултарас тесен, пирĕн колхозăн пурĕ миçе ĕне усрамалла, миçе центнер сĕт суса илмелле? Çўлте асăннă Молотов ячĕпе тăракан колхоз шайне çитсен, пирĕн колхоз çулленех миçе центнер сĕт суса илме пулĕччĕ?»

Кунта илсе кăтартнă йышши задачăсем шутлани çамрăксене Пленум постановленине тарăнăн ăнланса илме пулăшать. Пленум постановленийĕнче кăтартнă ĕçсене тăван колхоз пурнăçĕпе çыхăнтарни пирĕн Коммунистла партийĕ кашни колхоз çине тимлĕн пăхнине, мĕнпур колхозниксен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнине уççăн кăтартса парать.

Аслăрах классенче çакăн пек задачăна шутлама кирлĕ пур цифрăсене памасан та юрать. Задачăра кирлĕ хăшпĕр цифрăсене шыраса тупма ачасене хăйсене хушма пулать. Ку вăл Пленум постановленине тата тĕплĕнрех вĕренме пулăшать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕнче, Н. С. Хрущев юлташ докладĕнче тата СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕсенче те цифрăсем нумай. Вĕсемпе пĕлсе усă курсан, учитель арифметикăн кашни пайĕ валли задача тума пултарать. Учителĕн хăйĕн, паллах ĕнтĕ, çак постановленисене тĕплĕ пĕлмелле.

Постановленире ялхуçалăхĕн мĕнпур ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатса панă. Çĕрулмипе пахча çимĕç туса илесси тата пĕрчĕллĕ тырăсен тухăçлăхне ўстересси çинчен каланă вырăнсене те çамрăксене ăнлантарса пани кирлĕ.

Тĕслĕхрен. çакăн пек задачăсем илсе кăтартăпăр:

«1953 çулта колхозсемпе совхозсем пурĕ 6 миллион тонна минераллă удобрени илеççĕ. Ку вăл, 1940 çулхипе танлаштарсан. 2 хут ытларах пулать. 1964 çулта химипе металлурги промышленноçĕсем ялхуçалăхне 1940 çулхинчен 10 хут нумайрах минераллă удобренисем памалла. 1964 çулта ялхуçалăхĕ промышленноçран миçе тонна удобрени илет?»

Задачăсем содержани енчен пĕр-пĕринпе çыхăнуллă пулни питĕ аван: ку вăл хăшпĕр задачăсенче цифрăсен шутне чакарма пулăшать. Çавăн пек пĕр-пĕринпе çыхăнса тăракан задачăсем илсе кăтартăпăр:

«1. 1953 çулта тăваткал тĕмĕн 318 пин гектар çĕрулми лартнă, ку вăл çĕрулми лартнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 10 проценчĕ пулать. 1953 çулта çĕрулми пурĕ мĕн чухлĕ çĕр лаптăкĕ йышăнса тăнă?

2. 1954 çулта çĕрулми лартакан лаптăка колхозсенче 4.128,5 пин гектара, совхозсенче 218 пин гектара çитермелле. 1954 çулта çĕрулми лартнă лаптăк, 1953 çулхипе танлаштарсан, миçе процент ўсет? Пĕр гектартан 140 центнер çĕрулми пухса кĕртсен, 1954 çулта пирĕн çĕршывра пурĕ мĕн чухлĕ çĕрулми пухса кĕртме пулать?»

Паллах, илсе кăтартнă задачăсене пĕрле кăна пама юрать, мĕншĕн тесен иккĕмĕш задачăна пĕррремĕшсĕр шутлама май çук.

Хăшпĕр чухне икĕ задачăшăн та пĕр ыйту лартма юрать. Акă, сăмахран:

«1954 çулта колхозсенче пахча çимĕç лартса тăвакан лаптăка 1.003,4 пин гектара çитермелле. Колхозсенче кашни гектартан купăста—175 центнер, хăяр — 110 центнер, помидор—135 центнер, суханпа ыхра—85 центнер, кишĕр—120 центнер, апат-çимĕç чĕкĕнтĕрĕ 155 центнер пухса кĕртмелле. Пахча çимĕç лартнă лаптăкра купăста 27,9 процент, хăяр—15,3 процент, помидор—17,1 процент, суханпа ыхра—11,6 процент, кишĕр—9,9 процент, апат-çимĕç чĕкĕнтĕрĕ 8,1 процент йышăнса тăрать пулсан, 1954 çулта пирĕн çĕршыври колхозсем пурĕ мĕн чухлĕ купăста, хăяр, помидор, кишĕр, суханпа ыхра, чĕкĕнтĕр туса илеççĕ?» Задача питĕ пысăк ан пултăр тесен, кунта асăннă пахча çимĕçсене пурне те кĕртмесен те юрать.

МТС-семпе совхозсем енĕпе те задача тума пулать. Икĕ задача пĕр-пĕринпе çыхăнуллă пулчăр тесен, иккĕшĕншĕн те çакăн пек пĕр ыйту лартни вырăнлă: колхозсемпе совхозсем 1954 çулта мĕн чухлĕ пахча çимĕç туса илеççĕ?

Партипе правительство МТС-сене вăйлăн аталантарассишĕн тăрăшаççĕ. Ачасене кун çинчен те задачăсем шутлаттарма юрать. Тĕслĕхрен, пĕр задача илсе кăтартăпăр:

«1953 çулта МТС-сенче 673 мастерской тата машинăсем лартмалли 1.130 сарай туса пĕтермелле. 1954 çулпа 1956 çул хушшинче 4.200 мастерской тата машина лартмалли 15 пин сарай тумалла. 1954—1956 çулсенче кашни çулах 1953 çулхинчен вăтамран миçе хут нумайтарах мастерской тата машина лартмалли сарай тумалла?» Ку задачăн отвечĕсем МТС-сен малашлăхĕ çинчен каласа параççĕ.

Кунта илсе кăтартнă йышши задачăсем татах та нумай тума пулать. Вĕсем пурте пирĕн ялхуçалăхĕн пулас çитĕнĕвĕсене кăтартса параççĕ тата пирĕн халăх умĕнче тăракан калама çук пысăк задачăсене тĕплĕнрех, тарăнрах ăнланса илме пулăшаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕнче тĕл пулакан цифрăсенчен задачăсем майлаштарса туни шкулсенче халăхи вăхăтра усă куракан задачниксем юрăхсăра тухрĕç тенине пĕлтермест. Учебниксемпе задачниксем тĕп вырăнта пулмалла. Пурнăç çав тери хăвăрт улшăнса пыни шкулти вĕренў ĕçне пирĕн çĕршывра пулса иртекен пысăк ĕçсемпе тачă çыхăнтарса пыма хушать. Çавăнпа та учитель, учебниксемпе усă курнипе пĕрлех, вĕренекенсене пурнăçра тĕл пулакан тĕслĕхсем илсе кăтартни, кашни урока тĕплĕн шухăшласа, творчествăлла ирттерни кирлĕ.

Задачăсенче шутласа кăларнă хăшпĕр цифрăсемпе учительсен колхозниксемпе ирттерекен калаçусенче усă курсан аван пулать. Партипе правительство йышăннă постановленисенчи пур цифрăсем те пирĕн ялхуçалăхĕ тĕнче халиччен курман çитĕнўсем умĕнче тăнине кăтартса параççĕ.

Г. ВОЛКОВ,
Чăваш педагогика институтĕнчи педагогика кафедрин аслă преподавателĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ

Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи ирхине Генеральнăй Ассамблейăн пленумĕнче пăхса тухма тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ямалли тата тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли мерăсем çинчен СССР делегацийĕн резолюци проектне тăратнă.

Америкăпа Англи ушкăнĕн представителĕсем совет делегацийĕ тăратнă çак ыйтăва Политикăлла комитетра сÿтсе явасшăне темиçе хутчен чарса лартма хăтланни йăнăçăр пулни çинчен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.

Ларăва уçса, Генеральнăй Ассамблейăн председателĕ Пандит госпожа вăл СССР резолюцийĕн проекчĕ тăрăх, çавăн пекех тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярасси тата тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва чакарасси çинчен тăракан ыйту тăрăх делегатсене тухса калама чарма шутламанни çинчен пĕлтернĕ. США тата Англи представителĕсем председателĕн çак решенине хирĕç тухса каланă.

Польша представителĕ М. Нашковский Генеральнăй Ассамблейăн ларăвĕсене ирттермелли ĕç йĕркин 67-мĕш правили тăрăх резолюци проекчĕ пирки прениссем пуçлама сĕнÿ панă. А. Я. Вышинский Польша представителĕн сĕнĕвне тата Ассамблея председателĕн решенине ырланă.

США представителĕ Лодж председателĕн решенине хирĕç тепĕр хут протестленĕ пирки, Пандит госпожа хăй СССР представительне сăмах парасси çинчен йышăннă решение сасăлама тăратнă. Америкăпа Англи ушкăнĕ 19 сасă пулăшнипе çак решение йышăнтарман. Председатель решенийĕшĕн 12 делегат (СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки, Инди, Индонези, Бирма тата ытти çĕршывсем те) сасăланă. 16 çĕршывăн представителĕсем нихăш майлă та сасăламан.

Сапла майпа, тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен тăракан ыйтăва тивĕçлипе сÿтсе явас вырăнне сасăлании сăлтавĕсем пирки делегатсем тухса каланине итлемелле кăна тунă.

Сасăлании сăлтавĕсене ăнлантарса парас шутпа Польша представителĕ М. Нашковский тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: Корейăра перемири туни халăхсене хумхантаракан чи кирлĕ мĕнпур ыйтусене татса пама май пуррине çирĕплетсе пачĕ. Çавăн пекех Политикăлла Комитет СССР резолюцийĕнче малтан каланин пĕрремĕш пунктне йышăнни те çав чăнлăха çирĕплетсе панă. Вăл пунктра çакна палăртнă: Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартни тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатас ĕçре пысăк утăм туни пулса тăрать, çавна май тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене малалла пурнăçласа пыма тата лайăхрах условисем пулса тăрассĕ. Анчах Политикăлла комитетăн ытларахăшĕ çак фактран кирлĕ выводсем тумарĕ, Совет делегацийĕн сĕнĕвне пĕтĕмĕшпе йышăнмарĕ.

Польша халăхĕ, тенĕ юлашкинчен М. Нашковский, ООН çирĕп мирпе тĕнчери хăрушсăрлăх валли, çавăн пекех халăхсем хушшинче мирлĕн килĕштерсе ĕçлеме условисем туса паракан мерăсем йышăнасса кĕтет.

Польша делегацийĕ СССР резолюци проекчĕшĕн сасăлĕ. Мĕншĕн тесен Польша делегацийĕ çакна çирĕппĕн ĕненсе тăрать: СССР резолюцийĕшĕн сасăласа, вăл мир ĕçĕшĕн, халăхсем хушшинче пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлессишĕн тăрать.

США представителĕ Лодж совет делегацийĕн резолюци проектне хирĕç тухса каланă, вăл Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем çинчен тахçантанпах сĕтĕрекен элеклĕ сăмахсене тепĕр хут каланă.

Чехословаки делегацийĕн пуçлăхĕ В. Давид çапла каланă: Корейăри перемири тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма нумай пулăшрĕ. Пĕтĕм тĕнчери халăхсем Корейăра перемири тунине савăнса кĕтсе илнĕ вăхăтра, США йывăр лару-тăрăва малалла çăмăллатма чăрмантарас тесе мĕн тума пултарнине йăлтах тăвать. Çавăн пек условисенче СССР делегацийĕ тăратнă сĕнÿсем питех те вырăнлă.

Чехословаки делегацийĕ, тенĕ В. Давид, совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене пĕтĕмĕшпех ырлать. Мĕншĕн тесен вăл сĕнÿсене йышăнни, нимĕн иккĕленмелли те çук, ООН-а хăйĕн чи кирлĕ задачисене пурнăçласси патне çывхартĕччĕ, унăн авторитетне ÿстерĕччĕ тата тĕнчери йывăр лару-тăрăва чăннипех çăмăллатма пулăшĕччĕ.

Ун хыççăн Гватемала представителĕ Ториэльо Гаррида тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: Гватемала делегацийĕ хăшпĕр çĕршывсенче халăхсем хушшинчи курайманлăх пропаганди туса пынине сивлесси çинчен совет делегацийĕ панă сĕнÿ майлă тăрать.

УССР представителĕ А. М. Барановский СССР делегацийĕн резолюци проекчĕ майлă тухса каланă. Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем, тенĕ вăл, хальхи вăхăтри йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли майсем шыранă чухне, Америкăри агрессиллĕ ушкăнсем «сивĕ вăрçа» сарса пырассĕ, хĕçпăшалланассине вăйлатассĕ, Çурçĕр Атлантика блокĕн çар ĕçĕсен программине пурнăçа кĕртме васкассĕ.

Тĕнчери халăхсем, тенĕ А. М. Барановский, хĕçпăшалланассине чарса лартма, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи лару-тăрăва йывăрлатса пыракан политикăна чарса лартма тата тĕнчере йĕркеллĕн пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлеме тытăнма çине тăрса требовани лартассĕ.

БССР представителĕ К. В. Киселев ĕнентерекен сăлтавсем илсе кăтартнă. Вăл сăлтавсем çакна кăтартса парассĕ: совет делегацийĕ тăратнă резолюци проектĕнчи чи кирлĕ ыйтусене татса пани тĕнчери хальхи вăхăтри йывăр лару-тăрăва çăмăллатма, государствăсем хушшинче, чи малтанах аслă державăсем хушшинче; пĕр-пĕрне шанса тăмалла тата килĕштерсе ĕçлемелле тума питĕ кирлĕ.

Ун хыççăн совет делегацийĕн резолюци проектне сасăланă. Резолюци преамбулин (малтан каланă пĕтĕмĕшле пайăн) пĕрремĕш параграфне ытларахăш сасăпа йышăннă. «Генеральнăй Ассамблея çакна палăртать: Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартни тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатас çĕрте пысăк утăм туни пулать. Çавна май тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тĕлĕшпе тумалли мерăсене малалла пурнăçласа пыма лайăхрах условисем пулса тăрассĕ», тенĕ вăл параграфра. 14 делегаци, вăл шутра СССР, УССР, Польша, Чехословаки, Инди, Индонези, Бирма, Азири тата араб çĕршывĕсем, çак параграфшăн сасăланă. Ăна хирĕç тăвата делегаци сасăланă, 28 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Резолюци преамбулин иккĕмĕш параграфĕшĕн 7 делегаци (СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки, Инди тата Саудовски Арави) сасăланă. 17 делегаци (Азири тата араб çĕршывĕсенчен чылайăшĕ, çавăн пекех Латинла Америкăри хăшпĕр çĕршывсем) нихăш майлă та сасăламан. 29 çĕршыв представителĕсем, вăл шутра США, Англи тата Франци, çак параграфа хирĕç сасăланă. Иккĕмĕш параграфра çапла каланă: «Çав вăхăтрах Генеральнăй Ассамблея çакна кăтартса парать: чылай çĕршывсенче васкаса хĕçпăшалланас ĕç чакса пырать кăна мар, тата пысăкрах хăвăртлăхпа пулса пырать. Çынсене йышлăн пĕтермелли хĕçпăшал, çак тĕллевпе юлашки вăхăтра атомлă энергипе усă курнă май, тата ытларах аркатакан, миллионшар çынсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан хĕçпăшал пулса тăрать».

Америкăпа Англи ушкăнĕ çавăн пекех совет делегацийĕ тăратнă резолюци проекчĕн выводсем тăвакан пайне те йышăнтарман. Азири государствăсемпе араб государствисен чылай делегацийĕсем СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсемпе пĕрле çак проектăн уйрăм параграфĕсемшĕн сасăланă, чылай делегацисем нихăш майлă та сасăламан. Генеральнăй Ассамблея «çакна йышăнать: ют çĕршыв территорийĕсем çинче çар, сывлăш-çар тата тинĕс-çар базисем туни тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне ÿстерет, государствăсен наци суверенитечĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтересси патне илсе пырать» текен резолюци проекчĕн параграфĕшĕн, çавăн пекех çак базăсене пĕтересси çинчен панă сĕнÿшĕн СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки делегацийĕсемсĕр пуçне Египет, Ирак, Саудовски Арави тата Инди делегацийĕсем сасăланă. 7 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Хĕвеланăç Германири ĕççыннисем, Америкăпа Англи тата Франци оккупацине пула, асап курса пурăнассĕ. —

Эссен — Хĕвеланăç Германири пысăк хуласенчен пĕри. Анчах хулари нумай кварталсенче ĕçмелли шыв çук. Çăмахран, «Стелеер Талес» районĕнче пурăнакансем ĕçмелли шывсăр аптăрассĕ. Вĕсен пичкепе шыв кÿрсе килессе кĕтсе черетре тăмалла килет. Ĕçмелли шыв çуккипе аптăранă хĕрарăмсем ачисене шкула яма пăрахнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Стелеер Талес» кварталĕнче пурăнакансем шыв кÿрсе килессе кĕтсе черетре тăрассĕ.

Центральбильд фотоÿкерчĕкĕ.

Австри хаçачĕ Иран Америкăн çар бази пулса тăни çинчен

ВЕНА, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Эстеррейхише фолькcштимме» хаçат «Иран хăрушлăх çулĕ çинче» ят парса пĕлтерни пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Ют çĕршывсен Тегеранри сăнавçисем палăртнă тăрăх, Иран майĕпен Америкăн çар бази пулса тăрать. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче Америкăн 15 çар инженерĕ, Америкăн çар советникĕсен ушкăнĕн руководителĕ Мак Клир генерал ертсе пынипе Шираза районне пырса кайнă. Çав районта Америка çарĕсем валли темиçе лагерь тума хатĕрленессĕ.

Октябрь уйăхĕнче Америкăн çар миссийĕ СССР чикки çывăхĕнчи Мешедăна пырса кайнă. Миссие çав генералах ертсе пынă. Трумэн програмин тăваттăмĕш пункчĕ тăрăх, Мешеда районĕнчи аэродрома 1952 çултах чылай пысăклатнă пулнă. Халĕ Мешедăри, Тавризри тата Хамаданри аэродромсене Америкăн стратегилле авиацийĕ валли тата ытларах çĕнетсе лайăхлатмалла. Американецсем Хамаданра, Аракра тата Кумара складсем тума хатĕрленессĕ. Вăл складсем США-ран илсе пыракан çар материалĕсене хума кирлĕ. Бушир портне Америкăн çар материалĕсем тиенĕ 8 судни пырса çитнĕ те ĕнтĕ.

Французсен Тегеранри ушкăнĕсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, Азербайджан çар округĕнче Америкăн çар советникĕсен ушкăнĕ пурăнать. Хальхи вăхăтра Иран çарне тасатас ĕçе, çарти ертсе пыракан вырăнсене çĕнĕ çынсем уйăрса лартас ĕçе американецсемпе килĕштерсе туни кунта вăрттăн ĕç пулса тăмасть. Ют çĕршывсен Тегеранри сăнавçисем Иран çул-йĕрĕ США-па çар тĕлĕшĕнчен çыхăнса ĕçлемелли çул-йĕр пулса тăрать, тесе палăртассĕ. Захеди правительстви çав çулпа пырать. Вăл çул-йĕр Ираншăн питех те хăрушă çул-йĕр пулса тăрать.

„Совет Союзĕн Германири 33 предприятине тÿлевсĕрех Демократиллĕ Германи Республикин харпăрлăхне парас йĕрке çинчен" тунă протокол çине алă пуснă

БЕРЛИН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинра «Совет Союзĕн Германири 33 предприятине тÿлевсĕрех Демократиллĕ Германи Республикин харпăрлăхне парас йĕрке çинчен» тунă протокол çине алă пуснă.

Протокол çине Совет Союзĕпе Германи уйăрнă комисси членĕсем алă пуснă.

Çак протокол тăрăх, предприятисене тÿлевсĕрех вĕсен 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă мĕнпур активĕсемпе тата пассивĕсемпе пĕрле (кунта патентсем, патент заявкисем тата техникăлла документаци те кĕрессĕ) Германи харпăрлăхне парассĕ.

Предприятисене Германи аллине парас тĕлĕшпе кашни предприятирех икĕ енĕ те актсем туса хатĕрлессĕ. Вăл актсем çине Совет Союзĕн Германири пурлăхăн управленийĕн представителĕсем тата нимĕç енĕн уполномоченнăйĕсем алă пусассĕ.

Протокол çумне Демократиллĕ Германи Республикин харпăрлăхне тÿлевсĕрех памалли предприятисен списокне хушса хунă.

«ВĂТАМ ХĔВЕЛТУХĂÇ ОБОРОНИНЕ» ХУТШĂНМА КИЛĔШМЕÇÇĔ

КАИР, декабрĕн 2-мĕшĕ (ТАСС). «Аль-Бахира» хаçат çапла пĕлтерет: Дамаскран илнĕ сведенисем тăрăх, Сири президенчĕ Шишекли тата Ливан премьер-министрĕ Яфи нумаях пулмасть тĕл пулнă. Ун чухне вĕсем «Вăтам Хĕвелтухăç оборонине» хутшăнасси çинчен панă сĕнĕве йышăнма кирлĕ марри çинчен решени йышăннă. Вăл сĕнÿсене Сирипе Ливан правительствисене «Çурçĕр Атлантика союзĕн» Европăри кăнтăр зонинчи тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ—Америкăн вице-адмиралĕ Райт тата Америкăн ытти официальнăй çыннисем урлă панă пулнă.

«АДМИРАЛ УШАКОВ» КИНОФИЛЬМА КĂТАРТМА ЧАРНĂ

АФИНЫ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Влаçсем Совет Союзĕнче кăларнă «Адмирал Ушаков» кинофильма кăтартма чарнă. Кунта пĕлтернĕ тăрăх, кинофильма кăтартма жандармери майорĕ çырса панă доклад хыççăн чарнă. Майор. фильма пăхса тухнă хыççăн, çакăн пек вывод тунă: «Ушаков—хăйĕн шухăшĕ енчен те, ĕçĕ енчен те революционер», «фильмăн пĕтĕм шухăшĕ коммунистла революцие палăртса тăрать», «фильмри геройсем государство стройне хавшатма пултаракан ĕçсем тăвассĕ».

ГААГА ХУЛИНЧИ КАНАШЛĂВĂН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

ПАРИЖ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри хаçатсем Гаага хулинче пулса иртнĕ Хĕвеланăç Европăри ултă çĕршывăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕ путланса ларни çинчен çыраççĕ. Канашлăва «Европăри политикăлла пĕрлешÿ» текенскерĕн проектне туса хатĕрлес тĕллевпе ирттернĕ пулнă.

«Ултă çĕршывăн министрĕсен Гаагăри канашлăвĕ çинчен,—тесе çырать «Еруа» хаçат,—вăл Европăри политикăлла пĕрлешĕвĕн проектне пĕр утăм та малалла ярайманнине палăртнисĕр пуçне, эпир нимĕн те калаймăпăр. Ултă çĕршыв представителĕсен çитес çулхи мартăн 30-мĕшĕнче Брюссель хулинче пулмалли тĕлпулăвĕ хальхинчев ăнăçлăрах пулĕ-ши? Ун пирки нимĕнле шанăç та çук».

«Либерасьон» хаçат та: Гаагăри канашлура Брюссель хулинче çĕнĕрен канашлу пухасси çинчен йышăннă решенисĕр пуçне нимĕнле усăллă решени те йышăнман, тесе палăртать.

НОРВЕГИРЕ ТАВАР ХАКĔСЕМ ÿСЕÇÇĔ

ОСЛО, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Фрихетен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх. Норвегире ыраш çăнăхĕн хакĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 18 процент, тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăр хакĕ—39 процент, сахăр песокĕн хакĕ—114 процент, кофе хакĕ 115 процент ÿснĕ.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кăнтăрлахи пĕрлехи ларура Генеральнăй Ассамблея Америка делегацийĕ «тискер ĕçсем» çинчен сĕннĕ ыйтăва пăхса тухма тытăннă. Çак «тискер ĕçсене» Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çарĕсем тата Китай добровольцĕсем «Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен» тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе тунă пулать.

США представителĕ хăйĕн сăмахĕнче США çар министерствин «тискер ĕçсем» çинчен тунă доклад текенскерĕнчи элеклĕ шухăшсене тепĕр хут каланă. Доклад текенскерĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикин çарĕпе Китай добровольцĕсем «тискер ĕçсем» туни çинчен суйса çырнă. Лодж Совет Союзне, Китай Халăх Республикине тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикине хирĕç усал сăмахсем каланă. Юлашкинчен вăл Америка делегацийĕ ячĕпе, çавăн пекех Англи, Австрали, Турци тата Франци делегацийĕсем ячĕпе, пĕрле хатĕрленĕ резолюци проектне тăратнă. Çав резолюци проектĕнче тискер ĕçсем тÿни çинчен килекен «донесенисемпе сведенисем пирки хытă шикленнине» палăртма, «кирек хăш правительство тата кирек хăш власть та» «тыткăна лекнĕ çар служащийĕсемпе гражданла çынсем тĕлĕшпе» тĕрлĕрен «тискер ĕçсем тунине сивлеме» сĕннĕ.

Лодж хыççăн Англи, Турци тата Канада представителĕсем тухса каланă. Вĕсем делегатсене Америка делегацийĕн сĕнĕвне ырлама чĕннĕ.

Польша представителĕ М. Нашковский хăйĕн сăмахĕнче çакна кăтартса панă: Америка делегацийĕ, Генеральнăй Ассамблейăна «тискер ĕçсем» çинчен хăйĕн ыйтăвне йышăнтарма тăрăшса, çак ыйтупа тĕнчери йывăр лару-тăрăва малалла вăйлатас, тĕнчери çынсен шухăш-кăмăлне пăсас ĕçре усă курма шутлать. М. Нашковский делегатсене çакăн пек ĕç çинчен аса илтернĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсем «тискер ĕçсем» çинчен тăракан хăйсен ыйтăвĕ тавра çĕнĕ элекле кампани пуçласа яма хытă тăрăшассĕ. Çак кампанийĕн тĕллевĕ—Корейăри политикăлла конференцие пухма чăрмантарас е ăна пухмалла мар тăвас тесе çĕнĕ сăлтав тупасси. М. Нашковский США-н çар министерствин докладĕнче каланă шухăшсемпе «çынсем кăтартса панисем» суя пулнине кăтартса панă. Нашковский çакна докладра мĕн çырнине тишкерсе тухса кăна çирĕплетсе панă.

Мирлĕ килĕштерсе ĕçлес тĕллевпе, тенĕ М. Нашковский, Америка делегацийĕ Корейăпа Китай халăхĕсем тĕлĕшпе ăссăр майпа шухăшласа кăларнă сăмахсене Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн сивлемелле. Америка ООН-ран США-н государство департаменчĕн пропаганда хатĕрĕ туса хума хăтланать, Генеральнăй Ассамблейăн çавна хирĕç тăмалла. ООН-ăн тĕнчери хутшăнусенчи лару-тăрăва çивĕчлетессишĕн мар, мир ĕçĕшĕн тата халăхсем хушшинче мирлĕн килĕштерсе ĕçлессишĕн тăмалла. Польша делегацийĕ США делегацийĕн элеклĕ резолюци проектне татăклăн хирĕç тăрать.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчи пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕнче Америка делегацийĕ «тискер ĕçсем» çинчен тăратнă элеклĕ ыйту тăрăх Голланди, Çĕнĕ Зеланди, Бельги, Франци, Греци тата Кăнтăр Африка Союзĕн делегачĕсем тухса каланă (çак çĕршывсен правительствисем Америкăн Корейăпа Китай халăхĕсене хирĕç пынă агрессине çарсем ярса пулăшса тăнă). Вĕсем Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики çинчен Америка представителĕ каланă элеклĕ сăмахсене тепĕр хут каланă. Бразили делегачĕ те çавăн евĕрлĕ тухса каланă.

Чехословаки представителĕ В. Давид çапла пĕлтернĕ: «тискер ĕçсем» çинчен калакан элеклĕ ыйтăва Генеральнăй Ассамблейăн кун йĕркине кĕртнине сивлемелле, мĕншĕн тесен вăл мир ĕçне тата халăхсем пĕр-пĕрипе туслăн килĕштерсе ĕçлессине хирĕç пырать. Паллă ĕнтĕ, хăйĕн элеклĕ ыйтăвне Генеральнăй Ассамблейăна йышăнтарма хăтланса, США делегацийĕ государствăсем хушшинчи çыхăнусене йывăрлатма, тĕнчери общественность шухăш-кăмăлне пăсма шухăшланă.

Америка делегацийĕ тăратнă уйрăм «ĕçсене» пăхса тухса. Чехословаки представителĕ çак «ĕçсене» «свидетельсем» вырăнĕнче пулнă, юри тытнă çынсен суя «кăтартăвĕсем» тăрăх туса хатĕрлени çинчен каласа панă.

Чехословаки представителĕ çакна палăртнă: США-ри влаçра тăракан ушкăнсем хăйсен ĕçĕсемпе. Китай Халăх Республикин ООН-ри законлă прависене тепĕр хут хисеплемелле тăвас çĕрте çĕнĕ чăрмавсем кÿрес тесе, Китай Халăх Республикине хирĕç элеклĕ кампание вăйлатма хытă тăрăшаççĕ. Ку кампани, тенĕ В. Давид, çак кампание пуçлакансен ĕçĕ путланса ларнипе вĕçленĕ.

Францири хаçатсем Хо Ши Мин пĕлтерни çинчен мĕн çыраççĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Францири буржуалла хаçатсем, Демократиллĕ Вьетнам Республикин президенчĕ Хо Ши Мин калаçусем ирттерме май пурри çинчен пĕлтерни пирки çырса, çакна йышăнаççĕ: Бао Дай ушкăнĕнчи çынсем хăраса ÿкнĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Франци çарĕсен пулăшăвĕсĕр тытăнса тăма пултарайманнине сисеççĕ, çавăнпа та вĕсем пур майсемпе те вăрçа малалла тăсса пырассишĕн тăрăшассĕ.

«Вьетнамри националистсен шухăш-кăмăлĕ,—тесе çырать «Монд» хаçат,—националистсен хăйсен шухăшĕ тăрăх та, çакна çирĕплетсе парать: Бао Дай режимĕ политикăлла вăй тĕлĕшпе Вьетмина (Демократиллĕ Вьетнам Республикине çавăн пек калаççĕ.—Ред.) хирĕç тăма пултараймасть. Ку вăл вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă хыççăн палăрĕ. Çавăнпа та вĕсем калаçусем ирттерме май пуррине хирĕç тăраççĕ.

Католикла «Круа» хаçат: Хо Ши Мин панă ответсене «мĕнпур çĕршывсенче анлăн сÿтсе явассĕ». тесе палăртать

«Пари-пресс-Энтрансижан» хаçат çапла çырать: Хо Ши Мин панă ответсем пирки пулса тăнă шухăш-кăмăл, Францире ун пирки пулнă малтанхи шухăш-кăмăл пекех, Франци правительстви «эпир калаçусем ирттерме хатĕр» тенипе мĕн калассăн пулнине уççăн палăртма кирлине кăна çирĕплетсе пачĕ.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, баодайла Вьетнамра Хо Ши Мин президент пĕлтернине çавăн пекех ун пирки Францири хăшпĕр деятельсем пĕлтернине пичетлесе кăларма чарнă.

19 çул пĕр ĕçре

КОМСОМОЛЬСКИ. Районти магазина татти-сыпписĕр халăх кĕре-кĕре тухать. Прилавок умĕнче—магазин заведующийĕ Елена Назаровна Смирнова.

Смирнова юлташ тавар илме пыракансене яланах ăшшăн кĕтсе илме тăрăшать, вашнипе кăмăллăн калаçать.

19 çул хушши продавщица пулса, вăл суту-илÿ ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ. Кашни уйăхрах тавар çаврăнăш планне ирттерсе тултарса пырать, суту-илÿ культурине ÿстерессишĕн те тăрăшать. Унăн ĕмĕчĕ—халăха ытларах тавар сутасси, кулленех кирлĕ таварсем нумайрах тата вăхăтра кÿрсе килесси.

Смирнова юлташ—райпотребсоюз правлени членĕ. Вăл суту-илÿ ĕçне лайăхлатассишĕн нумай вăй хурать, çамрăк продавецсене пулăшать, вĕсене ĕçре вĕрентет. КПСС райкомĕн ревизи комисси членĕ пулнă май общественлла ĕçсене анлăн хутшăнать. Иртнĕ суйлавра ăна халăх сучĕн заседателĕ пулма суйланă.

Л. ТАЛЛЕРОВ.

Радио кĕртеççĕ

КАЛИНИНО. Районта ялсене радиофикацилес ĕç çулсеренех лайăхланса пырать. Кăçал «Новый путь» колхозăн икĕ бригадине радиофикацилеиĕ. Халĕ колхозра 65 радиоточка. «Партизан» колхозра 73 киле радио кĕртнĕ.

А. СРЕТЕНСКИЙ.

Кĕскен

★ УЛАТĂР. Юлашки вăхăтра колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем нумай сутаççĕ. «Свободный труд» артель 60 центнер аш-какай сутрĕ. «Красный луч» колхоз та çавăн чухлĕ аш-какай тата 37 пин литр сĕт, «Победа» колхоз 32 пин литр сĕт сутрĕç. «Красный луч» колхоз икĕ автомашина туянчĕ.

Н. КОЛЕСОВ.

★ ЕЛЧĔК. Çак кунсенче вăтам шкул райпотребсоюзран 9 лаша вăйлĕ электродвигатель туянчĕ. Двигатель вăйĕпе шкула çутатма, опытсем тума, киносеанссем ирттерме пулать.

Двигателе ĕçлеттерме вĕренме техникăлла кружок тунă.

В. АНИКИН.

★ ИШЛЕП. Молотов ячĕпе тăракан колхозра тăлăх ачасемшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул колхозри пулăшу касси тăлăх ачасене 1.500 тенкĕлĕх кĕпе-тумтир тата апат-çимĕç парса пулăшнă. Çак кунсенче 800 тенкĕлĕх тăханмалли япаласем илсе панă. Кунсăр пуçне, пулăшу касси тăлăх ачасене валли çителĕклĕ таран апат-çимĕç продукчĕсем уйăрса хучĕ.

А. ЕГОРОВ.

КАЛИНИНО. «Салют» колхозра 1.500 чăх вырнаçмалăх тата 150 ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса пĕтерчĕç. Пĕр вăхăтрах кунта зерносушилка туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Çитес çул саман кирпĕчĕрен сысна вити тума пал[...]

В. КУ[...]

Библиотекăсем валли кĕнекесем туянăр

Чăвашкниготорг организацисемпе учрежденисен, колхозсен руко[...]сене тата МТС-сен директорĕсене çакăн çинчен пĕлтерет:

пур районсенчи кĕнеке магазинĕсенче те кассăна укça тÿлесе е [...] куçарса библиотекăсем валли кĕнекесем илме пулать. Халиччен ĕç[...] çĕнĕрен уçăлакан библиотекăсем валли кĕнекесем туянăр!

Литература туянма уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă курăр! [...] туянса библиотекăсене пуянлатăр.

ЧĂВАШКНИГОТ[ОРГ]

1954 çулта илсе тăма ялхуçалăх хаçачĕсемпе журналĕсене çырăнса[...]

Юлташсем—колхозниксем, МТС-семпе ялхуçалăх органĕсенчи работниксем, ялхуçалăх специалисчĕсем, учительсем!

1954 çулта илсе тăма çак хаçат-журналсене çырăнса илĕр:

«Сельское хозяйство» хаçат;

«Колхозное производство» журнал, — ку журнала колхоз председателĕсем тата колхоз активĕ—правлени членĕсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем, агрономсем, зоотехниксемпе счетоводсем (бухгалтерсем) тата мĕнпур колхозниксем валли кăларса тăраççĕ;

«Достижения науки и передового опыта в сельском хозяйстве» ятлă бюллетень, — çак бюллетене колхозсенчи, совхозсенчи, машина-трактор станцисенчи, районсенчи, облаçсенчи тата республикăсенчи ялхуçалăх органĕсенчи ертсе пыракан работниксемпе специалистсем валли, ялхуçалăх пропагандине туса пыракан работниксем, виçĕ çуллăх агрозоотехника курсĕсен преподавателĕсем, ялхуçалăхĕн наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен тата шкулсен работникĕсем валли, колхозник-опытниксем валли кăлараççĕ;

«Агротехсоветы колхозам» ятлă плакат. Ку плаката наукăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене тата ялхуçалăхĕнчи малта пыраканçен опытне пропагандăлас тĕллевпе кăлараççĕ, вăл колхозсенчи агрозоотехника курсĕсенче вĕрентнĕ чухне усă курмалли лайăх пособи пулса тăрать;

«Картотека сельпо» (социализмла ялхуçалăхĕнчи опытпа паллаштаракан картотека);

«Колхозное земледелие» ят[...] кăсем. Çак карточкăсене ты[...]рес ĕçри, бригадăсенче тата [...]че ĕçе организацилес енĕпе [...]ракансен опычĕпе паллашт[...] кăлараççĕ;

«Колхозное животноводст[...] карточкăсем. Ку карточкăсе[...] чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта [...] опычĕпе, çавăн пекех тат[...] чĕрлĕх фермисенче ĕçе орга[...]мелли майсемпе паллашта[...] кăлараççĕ;

«Ремонт» ятлă карточкăсем [...] точкăсене çĕнĕ машинăсене [...]не тата ытти ялхуçалăх [...] юсас ĕçри лайăх опыт[...]тарма кăлараççĕ;

«Тракторист и комбайнер» [...]точкăсем. Кун пек карточкăс[...] пыракан трактористсен, ком[...] бригадирсен тата участоксенчи [...]сен опычĕпе паллаштарма кăлараççĕ

«Земледелие», «Животно[...]», «Сельский строитель», «Соц[...]ское сельское хозяйство», «[...] МТС» журналсем.

Хаçатсемпе журналсене «С[...]гĕн» хуласемпе районсенчи [...]че, çыхăну кантурĕсемпе [...] тата агентствăсенче, почтальо[...]че çырăнса илме пулать, ç[...] колхозсенче, МТС-сенче, ш[...]режденисенче общественнăй [...]ченнăйĕсем те подписка йыш[...]

«СОЮЗПЕЧ[...]» РЕСПУБЛИКĂРИ [...]

Редактор [...] М. Н[...]

КИНО

«УДАРНИК»—декабрĕн 4-[...] лире ÿкернĕ илемлĕ фильм «Н[...] оливами».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-20, секретариат—2-54, промышленность пайĕ—2-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09660 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР